# Çĕр-шыв хӳтĕлевçисене саламлатпăр!

ХЫПАР

1997 çулхи кăрлачăн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

Анне, аппа та йăмăк, мăшăр… Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă

# Чăваш хĕрарăмĕ

7(825) №, 2014, нарăс, 22

Хакĕ ирĕклĕ.

16+

Хаçата электрон адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

**Хаклă ентешĕмĕрсем!**
**Сире Тăван çĕр-шыв хӳтĕлевçин кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп!**

Çак паллă уяв кунĕнче эпир хамăрăн аслă патшалăхамăрăн тăнăçлăхне сыхлакан, унăн чиккисене хапсăнуçăсенчен шанчăклăн хураллакан хӳтĕлевçĕсене чыслатпăр.

Тăван çĕр ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне сыхласа хăварассишĕн тăшманпа калама çук паттăррăн тата хăюллăн çапăçса пуçĕсене хунисене пурне те чун ыратăвĕпе аса илетпĕр. Вĕсем ĕмĕр-ĕмĕрех асра юпранĕç!

Паян Хĕç-пăшаллă çарсенче хĕсметре тăракан Раççей çыннисен çĕнĕ ăрăвĕ мăн аслашшĕсен мухтавлă йăлисене чыслăн малалла тытса пырать.

Çĕр-шывăн оборона пултарулăхне çирĕплетес ĕçре çамрăксене патриот туйăмĕсене ăша хывма, Тăван çĕр-шывăмăрăн историлле аваллăхне хисеплеме, йывăр вăхăтра ăна хӳтĕлеме хатĕр пулма вĕрентсе ӳстерни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Чăваш Республикинче çак ĕç çине уйрăмах тимлĕ пăхаççĕ, Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин ветеранĕсем тата Афганистан Республикинчи çапăçусен участникĕсем çамрăксемпе тĕл пулсах тăраççĕ, шкул ачисем валли "Зарница" тата "Орленок" çарпа спорт вăййисем тăтăшах ирттереççĕ, пирĕн яшсемпе хĕрсем Атăлçи федераци округĕн территорийĕнче пурнăçланакан тĕллевлĕ проектсене яланах хастаррăн хутшăнаççĕ.

Чăваш Ен çамрăксене çарпа патриот воспитанийĕ парас енĕпе тунă çитĕнӳсене федераци наградипе – РФ оборона министрĕн çар учетне чи лайăх йĕркеленине тупса палăртма ирттерекен смотр-конкурсра мала тухнăшăн паракан вымпелĕпе чысланă.

Ан тив, çирĕп чунлăх тата аслă Раççее пĕтĕм кăмăлтан юратни унăн хăватлăхне тата хăрушсăрлăхне ӳстерес енĕпе тăвакан ĕçре çĕнĕ ăнăçусемпе çитĕнӳсен никĕсĕ пулса тăччăр!

Сире улăпла сывлăх, чун çирĕплĕхĕ, телей тата ырлăх сунатăп!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.В.ИГНАТЬЕВ.**



Атте хӳттинче…

*Юлташран уйрăлăн – çулталăк йĕрĕн, кил-йышран уйрăлăн – вунă çул йĕрĕн, тăван çĕр-шывран уйрăлăн – ĕмĕр йĕрĕн.*

**Каларăш.**

## Нарăсăн 1-мĕшĕнчен – малтанхи хакпа

**Хисеплĕ вулакансем! "Хыпар" Издательство çурчĕн кăларăмĕсене 2014 çулăн II çурринчен илсе тăмашкăн нарăсăн 1-мĕшĕнчен тытăнса пуш уйăхĕн 31-мĕшĕччен иртнĕ çулхи хаксемпе çырăнтараççĕ**

| КĂЛАРĂМСЕМ | ИНДЕКС | ÇЫРĂНТАРУ ХАКĔСЕМ | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| | | Почта уйрăмĕсенче | «Чăваш пичет» киоскĕсенче | «Советская Чувашия» киоскĕсенче | Редакцире |
| Хыпар | 54800 | 460-86 | 279 | 279 | 144 |
| Хыпар-шăмат кун | 78353 | 218-22 | 141 | 141 | 90 |
| Çамрăксен хаçачĕ | 54804 | 272-22 | 231 | 231 | 144 |
| Чăваш хĕрарăмĕ | 11515 | 243-18 | 213 | 213 | 141 |
| Сывлăх | 11524 | 130-98 | 111 | 111 | 81 |
| Кил-çурт, хушма хуçалăх | 54806 | 122-70 | 111 | 111 | 81 |
| Хресчен сасси | 54838 | 226-62 | 162 | 162 | 114 |
| Хресчен сасси–кил | 43887 | 102-90 | 84 | 84 | 61-20 |
| Тăван Атăл | 11529 | 251-76 | 216 | 216 | 168 |
| Капкăн | 24608 | 122-10 | 105 | 105 | 87 |
| ЛИК (Литература. Искусство. Культура) | 83429 | 127-92 | 120 | 120 | 100 |
| Вести Чувашии | 54807 | 220-08 | 186 | 186 | 144 |
| Собрание законодательства Чувашской Республики | 54847 | 695-88 | 660 | 660 | 570 |
| Тантăш | 54802 | 192-18 | 132 | 132 | 90 |
| Самант | 73208 | 155-64 | 156 | 156 | 120 |
| Тетте | 73771 | 119-58 | 111 | 111 | 90 |



## ÇАНТАЛĂК

| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 22.02 | - 10 | - 12 |
| 23.02 | - 10 | - 9 |
| 24.02 | - 5 | - 6 |
| 25.02 | - 3 | - 8 |
| 26.02 | - 4 | - 11 |
| 27.02 | - 5 | - 10 |
| 28.02 | - 4 | - 10 |



АШШĔ-АМĂШĔН ПЫСĂК КАНАШĔ

# Карьерăпа сыв пуллашса ачашăн пурăнма хатĕр-и?

**Ачана тивĕçлĕ воспитани парăттăмччĕ, хам та кирлĕ шайра илмен... Çакăн пек каланине кашни утăмрах илтĕн-и? Темĕн, иккĕлентерет. Нумайăшне хăй йăлтах тĕрĕс тунă пек, пĕтĕмпех пĕлнĕ пек туйăнать. Шел, туйăнать кăна çав. Çыннăн пурнăç тăршшĕпех аталанмалла, ашшĕ-амăшĕ пулма вара – вĕренмелле. Тепĕр тесен, паян ку енĕпе литература çителĕклех. Вулама-аталанма ан ӳркен кăна. Халĕ вара ку енĕпе Чăваш Енри ашшĕ-амăшне çăмăлрах пулассăн туйăнать. Чăн та, çак эрнере Шупашкарти политехника институчĕ Чăваш республикин Хĕрарăмсен тата Ашшĕсен канашĕсемпе пĕрле ирттернĕ мероприятие "Хулари ашшĕ-амăшĕн пĕрремĕш пухăвĕ" тесе ят панă. Ăна йĕркелекенсемпе унта хутшăннисене итленĕ май çакăн пек шухăш амаланчĕ – ялта пурăнакан ашшĕ-амăшĕшĕн пĕлтерĕшлĕ марши вара ку?**

Пухăннисем ачан пултарулăхне çемьепе пĕрле – вăйсене пĕрлештерсе – аталантарас ыйтăва хускатрĕç. Тĕрĕссипе, çĕннине калаканах пулмарĕ темелле. Пепкене мĕн чухлĕ маларах вĕрентме пуçлатăн – çавăн чухлĕ хăвăртрах та çирĕпрех ăша хывать вăл. Чăваш çакна авалах çирĕплетнĕ: "Çамрăкла вĕренни – чул çинче, ватăлла вĕренни – юр çинче".

Яппунсен воспитанийĕ ыттисенчен уйрăлса тăнине нумайăшĕ пĕлет-тĕр. Калăпăр, вĕсем шăпăрлана ним тума та чармаççĕ, "юрамасть" сăмаха пĕчĕк чух илтсе те курмасть пĕчĕк яппун. Пухура та Масару Ибука сăмахĕсене иле-иле кăтартрĕç: "Пĕчĕк ачасем кирек мĕне те çăмăллăнах вĕренме пултараççĕ". Хăйĕн вĕрентĕвне-пĕтĕмлетĕвне ашшĕ-амăшĕ валли кăларнă "После трех уже поздно" кĕнекере çырса кăтартнă вăл. Америка психологĕ Эрик Эриксон та çын пурнăçĕн никĕсĕ ачалăхра хывăннине çирĕплетсе панă. Çулталăка çитиччен ачан çынсене шанасси аталанса пырать. 2-3 çулта пепке хăй тĕллĕн шухăшлама хăнăхать. 3-5 çулта вара хăйĕн шайĕнчи ыйтусене татса пама вĕренет. Масару Ибука çирĕплетнĕ тăрăх, 3-4 çул тĕлне ачан пуç мимийĕ 50-70 процент аталанса çитет. Пирĕн садиксенче вăтамран виçĕ çултан йышăнаççĕ ачасене. Çапла вара чи пĕлтерĕшлĕ тапхăрта ашшĕ-амăшĕ пĕччен – сĕмлĕхре тенĕ пек – тăрса юлать. Шăпах вĕсем валли йĕркеленĕ те Ашшĕ-амăшĕн пысăк канашне. Чăн та, аслисен малтан хăйсен ăс-тăнĕнче пĕчĕк революци туса ирттерме лекет, обществăра халĕччен тымар янă йăнăш хăш-пĕр шухăшпа сыв пуллашма тивет. Ачана вартах воспитани пама пуçламалли халĕ никамшăн та вăрттăнлăх мар тейĕпĕр. Унăн аталанăвне вара çуралнă пĕрремĕш кунранах йĕркелеме пуçламалла.

Цифра тĕнчипе те паллаштарчĕç пухăннисене. Пирĕн çĕр-шыв çут çанталăк пуянлăхĕнчен начаррисен йышĕнче мар: ылтăнĕ-кĕмĕлĕ те, газĕ-нефчĕ те йăтăнса кăна тăрать темелле. /Камăн кĕсийинче пухăнса пырать вăл – ку урăх ыйту/. Анчах та тĕп капитал мар ку. Тĕп вырăнта çын пулмалла. Йĕркеллĕ, ăслă-тăнлă çын. Раççей вĕренӳ тата ăслăлăх министрĕ Игорь Ливанов ачана 7 çула çитиччен вĕрентме тăрăшмаллипе килĕшет. Çак тапхăр – этем пурнăçĕнче чи пĕлтерĕшли. 7 çула çитиччен ача пурнăçри информацин 80 процентне ăша хывать. Шкул çакăн çумне 10 процент хушать, аслă шкул – 5 процент, корпоратив практики – 5 процент. Халĕ вара патшалăхăн вĕренӳ инвестицине тишкерер. Хысна вĕренӳ тытăмĕ валли уйăрнă укçаран шкул çулне çитменнисене 20 процент тивĕçет, 52 процент – шкулсене, 28 процент – аслă шкулсене. Куратпăр ĕнтĕ, пирамида пачах кутăн çаврăнса ларчĕ. Анчах та мĕн чухлĕ хыватăн – çавăн чухлĕ пуçтаратăн... Ахальтен мар-тăр Раççей шкул çулне çитменнисене вĕрентес ĕçĕн пахалăхĕпе тĕнчере 33-мĕш вырăн йышăнать.

Çӳлерех палăртнăччĕ ĕнтĕ, ку шурлăхран тухмалли çул-йĕр те пур. Малтанах статистика кăтартăвĕсемпе тавлашма сĕнеççĕ пухăва пуçтарăннисене: ачасен 2-3 проценчĕ кăна мар, 80 проценчĕ пултаруллă. Пултаруллă кăна мар, вĕсенче гени вăрлăхĕ пур. Çавна вăхăтра асăрхаса аталантарма пĕлмелле кăна. Çапла, çакна педагогсен ашшĕ-амăшĕпе пĕрле тумалла. Аталану проекчĕ /авторĕ Шупашкарти политехника институчĕн ректорĕн çумĕ Олег Волков профессор/ хатĕр. Ăна "Стратеги пуçарăвĕсен агентстви" ырласа йышăннă. Проектпа усă курса виççĕмĕш çул ăнăçлă ĕçлекенсем те пур республикăра. Чи кирли – кăтартăвĕсем тĕлĕнмелле хăвăрт ӳссе пыраççĕ. Вĕсен çумне ыттисем те хутшăнасса шанаççĕ проект авторĕсем. Информацие www.род21.РФ сайтран илме пулать.

Çакăн пек мероприятисенчен яланах тенĕ пек хавхаланса тухатăп. Пурнăç та çутăрах пек, тата кăштах тăрăшсанах лайăх енне улшăнассăн туйăнать. Анчах урама тухсанах тӳпере вĕçме пăрахса çĕр çине анатăп. Вĕренӳ тытăмне пырса тивекен пухура çак тытăмшăн яваплă чиновниксене курманни, ял тăрăхĕсенчи ача сачĕсен ертӳçисене чĕнменни канăçсăрлăх çуратрĕ. Ку ыйтăва, тем тесен те, общество организацийĕсен шайĕнче, вĕсен вăйĕпе кăна татса пама çук.

Масару Ибука кашни ача хăйĕн ĕçĕнче Леонардо е Микеланджело пулма пултарнине палăртать. Килĕшмелле. Тепĕр тесен, педагогика ăсчахĕсем тахçанах каланă çакна. Тĕллеве пурнăçа кĕртес тесен çав Масару Ибука амăшĕсене карьерăпа сыв пуллашса ачисемшĕн пурăнма сĕнет. Аван шухăш. Çапла пулмалла та йĕркеллĕ обществăра: арçын тулаш тĕнчешĕн, хĕрарăм шалтишĕн яваплă. Анчах та паян, хĕрарăмсем ачи-пăчине тăрантарассишĕн-тумлантарассишĕн аякри хуласене арçынпа тан ĕçлме çӳренĕ чухне, ытла та илĕртӳллĕ ĕмĕт пек кăна туйăнать çакă. Вăт йăлт йĕркеленсе çитсе амăшĕ вăхăта чăнах та килте, ачисемпе ирттерме пуçласан мĕн тери аванччĕ!

Сăмаха вĕçличчен Интернет анлăшне усрăм. Ачасем ӳссе çитĕннĕ, хальлĕхе мăнуксем парнелемен те, чăн та, воспитани ыйтăвĕсемпе юлашки вăхăтра кăсăклансах кайман. Çапах та кам-ха вăл Масару Ибука? Япони инженерĕ, предпринимателĕ, "Sony" корпорацие йĕркелекенĕсенчен пĕри, ачасене пĕчĕклех воспитани парас тата аталантарас концепцийĕн новаторĕ. Ку çӳллĕшрен, чăн та, шухăш-ĕмĕте инçе вĕçтерме çăмăлрах-тăр... Çапах та тĕрĕс калать вĕт-ха вăл! "Ачасем – пуласлăх", – тетпĕр. Апла тăк пепкемĕрсем валли çăкăр татăкĕ ĕçлесе илнĕ вăхăтрах амăшĕн ывăлĕнчен генерал хатĕрлемешкĕн те вăй-хăват çитермелле. Паллах, ашшĕ те çак ĕçрен айккинче тăрса юлмасан аван пулмалла. "Амăшĕ çапах та ывăлĕнчен шăлаварлă хĕрарăм кăна ӳстерме пултарать, – палăртрĕç пухăннисем. – Ашшĕн тĕслĕхĕпе кăна вăл чăн-чăн арçынна кăна мар, гение те çаврăнать..."

**Рита АРТИ.**

ТĔЛ ПУЛУ

# Çамрăк учительсене шкул илĕртмест

**Иртнĕ кĕçнерни кун Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн студенчĕсемпе тата унтан вĕренсе тухнă çамрăк специалистсемпе тĕл пулчĕ.**



«Обществăра вĕренӳ тытăмĕн ĕçĕ-хĕлне хурлакан чылай. «Ывăл-хĕре педагогика аслă шкулне вĕренме ямаллах-ши?» – иккĕленет ашшĕ-амăшĕ. Самана улшăннă тапхăрта учитель авторитечĕ çухалнин витĕмĕ халĕ те сирĕлсе пĕтеймен-ха.

Вĕрентекен ят-сумне ӳстерес тĕллевпе сахал мар ĕç пурнăçланать: учитель шалăвĕ ӳсет, пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатмалли çăмăллăхпа усă курма май пур. Шкулсене хальхи йышши тĕрлĕ хатĕрпе тивĕçтереççĕ, ялти вĕренӳ учрежденийĕнче те хăтлăх тĕлĕшĕнчен хуларинчен кая мар. Çапах диплом илнисем шкула ĕçе вырнаçма васкамаççĕ», – палăртрĕ Михаил Васильевич.

«Педагогикăра кадрсем ватăлса пыни вăрттăнлăх мар, çамрăксем 3% кăна. Пурнăç çулне шкулпа çыхăнтарма ачасенчен хăрани чăрмантарать ахăртнех», – пăшăрханчĕ ЧР вĕренӳ министрĕ Владимир Иванов. Чăн та, çакна хăшĕ-пĕри хирĕçлеме пăхрĕ-ха. Çамрăк учительсем пурте пĕр саслăн: «Ачасемпе ĕçлеме килĕшет, вĕсене юрататпăр, пĕртте хăрамастпăр. Коллектив та питĕ лайăх», – тесе ĕнентерме тăрăшрĕç.

Çамрăк специалистсене чи хумхантараканни – çурт-йĕр ыйтăвĕ. Шăпах ун тавра чылай калаçрĕç те. Патшалăх тĕрлĕ программи пирки пĕрремĕш хут çакăнта илтнисем те тупăнчĕç. Çапах та пурнăçпа тан пыракансем те пур-ха. Акă, сăмахран, Шупашкарти 27-мĕш шкулти кĕçĕн класс учителĕ Мария Родионова хăйĕн савăнăçĕшĕн влаçрисене тав турĕ.

«Эпĕ шкулта виççĕмĕш çул ĕнтĕ, икĕ ставкăпа ĕçлетĕп. Хваттер илес тесе пĕлтĕр çулла çине тăрса тăрăшрăм. Йăлтах ăнăçрĕ – нимĕн хăрамалли те çук иккен, ума тĕллев лартмалла çеç. Кредит ставкине патшалăх субсидилерĕ, кивçене саплаштарма шалу çителĕклĕ. «Пурте сирĕн алăра», – хамăн вĕренекенсене те çапла вĕрентетĕп эпĕ», – ыттисене те хăйĕнчен тĕслĕх илме чĕннĕн илтĕнчĕç унăн сăмахĕсем.

Патăрьел каччи Юрий Выросов кăçал алла диплом илсен тăван районне таврăнасшăн. «Сывлăх сыхлавĕнче «Земство тухтăрĕ» проект ăнăçлă ĕçлет, «Ял учителĕ» текеннине хута яма май çук-ши? 1 миллион тенкĕ сисĕмлĕ укçа çапах та...» – кăсăкланчĕ Юрий Леонидович.

«Шел те, эсир асăннă программа тухтăрсен дефицитне тĕппипех пĕтерме пулăшаймарĕ-ха. Хальлĕхе çавăн йышши тепĕр проекта пурнăçа кĕртме май çук. Муниципалитет шайĕнче Патăрьелсем çамрăксене пысăк пулăшу кӳреççĕ. Унпа усă курса кил-çурт çавăрнă тĕслĕх чылай. Çавăнпа та тăван тăрăхра тĕпленме хатĕрленсе тĕрĕс тăватăр», – хавхалантарчĕ çамрăка Михаил Игнатьев.

Республика ертӳçине педагогикăра яшсем сахалли те кăсăклантарчĕ. Педуниверситетăн вĕренӳ енĕпе ĕçлекен проректорĕ Валерий Алексеев пĕлтернĕ тăрăх – студентсен йышĕнче каччăсем 25% яхăн, хăш-пĕр факультетра, сăмахран, физикăпа математика уйрăмĕнче 80% çитет.

5-мĕш курс студентки Ирина Петрова ача сачĕн воспитателĕ пулма ĕмĕтленет. Çамрăк специалистсене социаллă пулăшу парас программăпа килĕшӳллĕн Çĕрпӳ район администрацийĕ ăна уйăхсерен стипенди те тӳлет. Ирина ĕçлеме палăртнă ача сачĕ çĕкленет кăна-ха. Пике алла диплом илнĕ çĕре хута каятех вăл.

«Шалу шутласа панă хута алла илтĕм – 5600 тенкĕ тухать. Шкулта ачасем сахаллине кура эрнере 11 сехет кăна ĕçлетĕп...» – чун ыратăвне пайларĕ Сĕнтĕрвăрри пики Анастасия Демидова. «Хăшĕ-пĕри 26 сехет ĕçлет, çав вăхăтрах теприсен урок шучĕ çитмест. Çамрăксене ку енĕпе кӳрентерме юрамасть», – хута кĕчĕç студент-учителе. «Манăн та сехетсем тулли марччĕ, анчах та шкул директорĕ лару-тăрăва питĕ ăнăçлă татса пачĕ – организатор тивĕçне пурнăçлама шанчĕç. Вĕсем те, эпĕ те кăмăллă», – хушса хучĕ ĕçтешĕ.

«Тулли ставкăпа ĕçлетĕп. Вĕрентекенĕн вăтам ĕç укçи 20 пин тенке яхăн теççĕ. Манăн расчетка çинче, тĕслĕхрен, шалу – 4400 тенкĕ», – сăмах илчĕ физкультура учителĕ, 5-мĕш курс студентки, Елена Юркина. «Авансра пĕрле-и? Тепĕр чух, темшĕн, ăна шалу вырăнне шутлама манаççĕ...» – тĕлĕнчĕ Владимир Иванов министр.

Чăнах та, хĕр аванса хушман-мĕн. «Шалу пĕчĕкки аслă пĕлӳ илни çинчен калакан документ çуккипе те çыхăннă», – ăнлантарчĕç ăна. Физкультура учительне ачасен урока çӳрес кăмăл çукки пăшăрхантарать. Класри 30 вĕренекенрен 10-шĕ спорт тумне ятарласа тăхăнса килмест-мĕн... «6-7 клас ачисем чупмасикме хирĕçлени тĕлĕнтерет паллах. Эпир спортпа туслă, пĕр-пĕр кун сирĕн урока пырса курăпăр-ха», – шӳтлесе те чăнласа калаçрĕ Михаил Игнатьев. «Пирĕн колледжа та пырăр-ха. Эпĕ унта акăлчан чĕлхи вĕрентетĕп. Хамран аслă студентсемпе ĕçлеме тивет, вĕсемпе пĕр чĕлхе тупма çăмăл мар», – калаçăва хутшăнчĕ тепĕр специалист.

Влаç представителĕсемпе çамрăксен хушшинче çураçулăх тата кăмăллă хутшăну çуралчĕ. Çавăнпа та-и, тен, чун ыратăвне уçма именмерĕç, чылай ыйту хускатрĕç. Шупашкар районĕнчи Çĕньялти шкулта акăлчан чĕлхи вĕрентекен Оксана Ильина калани вĕренӳ министрне тĕлĕнтерчĕ те. «Шкулсен пурлăх базине пуянлатма патшалăх укçа уйăрать-и? Сăмахран, манăн класра йĕркеллĕ хăма çук – линолеум сăрланăскер кăна. Унта пурă та начар çырать. Улăштарма ыйтатăп та: «Укçа çук», – теççĕ. Тата проектор шыра-шыра хăшкăлатăп...» – терĕ хĕр.

Тĕл пулу савăнăçлă самантпа вĕçленчĕ. Пултаруллисене ЧР Пуçлăхĕн стипендине тивĕçни çинчен калакан сертификат пачĕç. «Юратнă ĕçшĕн хавхалантарни пирĕншĕн пысăк чыс», – тав турĕ çамрăксен ячĕпе Анна Журавлева вĕрентекен.

**Алина ИЗМАН.**



САМАХ ПАРĂР-ХА

# Чустана вăхăтра унамалла

Елена АТАМАНОВА

Урама уçăлма тухнă пĕчĕк хĕрĕмпе ашшĕне тăрук çухатрăм. Телефонпа шăнкăравласан та тытмаççĕ. Малтан çурт умĕнче чиперех çӳретчĕç-ха. Тĕттĕмленме пуçласан тин таврăнчĕç. Кӳршĕсемпе пĕрле тăвайкки тунă иккен. Вĕсене курса юнашар подъездран та тухнă. Ачасем валли юр кĕлеткесемпе тĕрлĕ чĕр чун ăсталанă. Эпир пурăнакан çĕнĕ çурта туса пĕтерни çулталăк кăна çитет-ха. Халăх пĕчĕккĕн куçма тытăнчĕ, малтанхи пек пушă мар халь. Хăйне евĕрлĕ çынсем пурăнаççĕ кунта. Пĕр-пĕрне нихăçан курман пулин те никам та сывлăх сунмасăр иртмест. Кашни юн кун подъезд умĕнче пуху иртет. Çĕнĕ çурт çитменлĕхĕсене тата ытти мĕн пур вак-тĕвек ыйтăва сӳтсе яваççĕ. Ертсе пыракан компани ертӳçисене те айккинче хăвармаççĕ. Хитре, хăтлă пурăнасшăн çĕнĕ йăвара. Ырă çын сахал юлнă теме васкатпăр-ха. Килĕшес килмест чунпа. Юсав валли строительство материалĕ е сĕтел-пукан кам та пулин пушатнине курсан чĕнмесĕрех пулăшма васкаççĕ кӳршисем. Çурт тавра пушă лаптăк нумайран машина лартма вырăн çителĕклех. Çапах та тавлашу сиксе тухасран асфальт çине кашнин номерне çырса тухрĕç. Халь кашни «урхамахăн» хăйĕн ятарлă вырăнĕ пур.

Шăмат кунпа вырсарни кун хайхи тăвайккинчен ача татăлмарĕ. Каçченех ярăнчĕç, икĕ кун савăнчĕç шăпăрлансем. Каток çине аслисем те конькипе тухнăччĕ.

Тунти кун вара… Ĕçрен таврăннă çĕре тăвайккипе катокран нимĕн те юлманччĕ. Кашни çур метртан – тарăн путăк-шăтăк. Юртан ăсталанă мулкачсемпе упа çурисене çĕмĕрсе тăкнă. Ачисемпе пĕрле ашшĕ-амăшĕ те пăшăрханчĕ. Кун пеккинех кĕтмен, шухăшлама та пултарайман. Мĕншĕн? Усал ĕçе кам туни çийĕнчех палăрчĕ. Çывăхри кинотеатрта боевик курнă хыççăн ачасем киле васкаман, вăйне ниçта хурайманнипе тăвайккисене çĕмĕрме тытăннă. Садик картине кĕрсе воспитательсем конкурс валли ăсталанă юр кĕлеткесене аркатса тухма та именмен. 5-мĕш, 6-мĕш классенче вĕренекен ачасем çакнашкал сăтăр туса çӳреме пултарнине малтан ĕненесех те килмерĕ.

Кĕркунне пурăнмалли çурт-йĕрпе строительство компанийĕ çурт тавра хитре йывăççем лартса тухрĕ. Ик-виç кунран пăхатпăр та – тротуар хĕрринчи тĕмсен тăррисем йăлтах хуçăк. Клумбăсем çинче пĕр чечек те хăварман. Алă хурса хăварман, камăн усал ĕçĕ пулнине пĕлеймерĕмĕр ун чухне. Кайран паллă пулчĕ. «Таçтан пĕр купа арçын ача килсе тухрĕ те, малтан ярăнчăксене чулпа чĕрме, аркатма тытăнчĕç, кайран йывăççем çине куçрĕç», – пĕр тĕлĕнсе, пĕр кулянса каласа кăтартрĕ мăнукĕпе урама уçăлма тухнă кинеми. Çĕнĕ çурта пурăнма куçнисем вĕсен вырăнне тӳрех çĕннине – уртăш, кипарис, барбарис тĕммисем – туянса лартрĕç. Аванах чĕрĕлчĕç. Урăх пырса тĕкĕнекен пулмарĕ.

Ачасенче çакăн чухлĕ усаллăх пулни тĕлĕнтерет, пуçа ниепле вырнаçаймасть. Авăн уйăхĕнче шкула ашшĕ-амăшĕн пухăвне кайнăччĕ те, коридорта тин çеç пĕрремĕш класа килнĕ ачасем тăнине асăрхарăм. Садикрен халь çеç çитнĕ пĕчĕкскерсен çăварĕнчен мĕнле кăна киревсĕр сăмах тухмасть-ши? Пĕлтерĕшне хăй ăнланать-ши хăть? Унччен те пулмарĕ – юнашар тăраканнине пĕри сăлтавсăрах сиксе тапрĕ. Усаллăх, пĕр-пĕрне кӳрентересси, тем те пĕр каласа витлесси мĕнрен килет-ши? Амăшĕн аркинчен тытăнса çӳреме те пăрахман вĕт-ха ку ӳсĕмре. Шкул, учительсем, урам айăплă теме пăхать тепĕр ашшĕ-амăшĕ. Ача чи малтан çемьерен, çывăх çыннисенчен тĕслĕх илет. Килте йĕркеллĕ мар пулни ывăл-хĕрĕнче курăнатех. Ашшĕ-амăшĕ вара – чăн-чăн тĕкĕр.

Пухура вĕрентекен те тарăхсах калаçрĕ. Класри икĕ-виçĕ арçын ачан çывăх çыннисене икĕ çул хушшинче пĕрре те курман. Телефонпа шăнкăравласан тытмаççĕ. Киле кайсан кĕртмеççĕ. Ачин дневникне те асламăшĕ е кукамăшĕ кăна алă пускаласа ярать. Чи чарусăррисем, класа аялалла туртса пыраканнисем те икĕ-виçĕ çак арçын ача. Пĕри хĕл кунĕнче чӳречесене çĕмĕрнĕ. Уншăн ыттисен ашшĕ-амăшĕ айăплă пулчĕ, кантăк лартса пачĕ. Тепри вĕр-çĕнĕ сĕтел-пукана чĕрсе пĕтернĕ, пĕрле ларакан хĕр ачан куçлăхне çĕмĕрнĕ. Виççĕмĕшĕ коридорти стена çине усал сăмахсем çырса тухнă. Никам та мар, учителех айăплă çак пуçтахсемшĕн, унăнах директор умĕнче хĕрелме тивнĕ. Психолог та, педагог та ĕçлет вĕсемпе, виççĕшне те шута илнĕ.

11-12 çулти ача шкул пурлăхне, ют çын япалине ятарласа юрăхсăра кăларать пулсан каярах, ӳссе пынă май, унран мĕн кĕтмелли пур-ши? Сăтăр туни киленӳ кӳрет-ши? Халь чарай-масан, кайран мĕн кăтартĕç-ши тата? Чустана вăхăтра унамалла теççĕ те.

Кружоксем те, секцисем те ĕçлеççĕ шкулсенче. Спортзал та яланах уçă. Кăмăл кăна кирлĕ. Вăя ниçта хума, ушу-самбо секцийĕсене тӳлевлĕ çӳреме укçа çук пулсан уроксем хыççăн хăть мечĕк хăваласа чуп. Никам та чарас çук куншăн, ятлас çук. Сывлăхшăн та усăллă. Пуçа та усал шухăш пырса кĕмест.

ОЛИМПИАДА ХЫПАРĔСЕМ

# Олимп чемпионкин А.Сотниковăн несĕлĕ – пирĕн ентеш

Олимпиада вĕçлениччен пĕр кун çеç юлчĕ. Спортсменсем икĕ эрне ытла тĕрлĕ ăмăртура вăй виçнине телекуравпа тимлĕн сăнарăмăр, кăтартусемпе кăсăклансах тăтăмăр.

Иртнĕ эрнери çитĕнӳсем пирки те пăртак каласа хăварас килет. Раççейĕн пĕрлештернĕ командин пухмачне Ольга Граф медальпе пуянлатрĕ, вăл 3000 метрлă дистанцире конькипе чупса виççĕмĕш вырăн йышăнчĕ. Олимп вăййисене пĕрремĕш хут хутшăнакан Ольга Вилухина биатлонçă спринтерсен тупăшăвĕнче «кĕмĕл» çĕнсе илчĕ. Вырсарни кун çуна спорчĕн ăсти, 42 çулти Альберт Демченко «кĕмĕлпе» савăнтарчĕ.

Тунти кун тупăшăва сăрт-ту йĕлтĕрçисем, фристайлçăсем, конькипе чупакансем тата биатлонçăсем тухрĕç. Пирĕннисем медальсен пухмачне икĕ «бронзăпа» пуянлатрĕç. Шорт-трек тата могул енĕпе «бронза» çĕнсе илчĕç Раççей спортсменĕсем. 26 çулти спорт мастерĕ Александр Смышляев могул енĕпе тĕнчери чи вăйлă спортсменсемпе вăй виçсе виççĕмĕш вырăна тухрĕ.

Раççей фристайлçисем Олимпиадăра 20 çул пьедестал çине хăпарайманнине те палăртса хăвармалла. Шорт-трек енĕпе те нихăçан та малтисен ретĕнче пулман. Унччен Корея чысне хӳтĕленĕ, 2011 çултанпа Мускавра пурăнакан Виктор Ан дистанцие виççĕмĕш вĕçлерĕ.

Тĕнчипе палăрнă Евгений Плющенко кĕçнерни кун кĕске программăра пăр çине тухаймарĕ. Шăм-шакне çемĕçтернĕ чухне çурăмĕ ыратнине туйса илнĕ фигурист. Раççей спортсменĕсĕрех иртрĕ ăмăрту.

Нарăсăн 19-мĕшĕнче Раççей команди харăсах темиçе медаль çĕнсе тăваттăмăш вырăна хăпарчĕ.

Вик Уайлд сноубордист çĕршыв пухмачне «ылтăнпа» пуянлатрĕ. Американ вырăс пикине Алена Заварзинăна качча илнĕ, халĕ çемье Раççейшĕн тупăшать. Алена та çав дисциплинăра хĕрарăмсен хушшинче «бронза» çĕнсе илчĕ.

Йĕлтĕрçĕсем те ăнăçлă чупрĕç. Классика стилĕпе ăмăртса Никита Крюков, Максим Вылегжанин команда зачетĕнче иккĕмĕш вырăна тухрĕç.

Хоккей, биатлон енĕпе пире ăнăçмарĕ.

Пăшăрханăва каç кӳлĕм Раççей фигуристки Аделина Сотникова сирчĕ. Аделина пĕр йăнăшсăр ярăнчĕ. Нарăсăн 20-мĕшĕнче вăл Корея фигуристкипе Ен А Кимпа хĕрӳ тупăшăва тухрĕ. Çапах та Раççей спортсменки чи пысăк балл пухса Олимп чемпионки пулса тăчĕ.

**Аделина Сотниковăн йăх-несĕл тымарĕ пирĕн республикăпа çыхăннине пĕлтĕмĕр. Олимп чемпионки – Улатăрта çуралса ӳснĕ, Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçинче Совет Союзĕн паттăрĕ ята тивĕçнĕ Александр Кочетов летчикăн мăнукĕн ачи. Улатăрта унăн иккĕмĕш сыпăкри мăн аккăшĕ Любовь Федотова пурăнать.**

**Елена АТАМАНОВА, Алина ТИМОФЕЕВА.**

ÇУРТ-ЙĔР

# Чăваш Ен Атăлçи тăрăхĕнче – пĕрремĕш

Çак эрнере ЧР Строительство, архитектура тата çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх министерстви анлă лару ирттернĕ. Унта иртнĕ çулхи кăтартусене пăхса тухнă, ĕç планне çирĕплетнĕ.

Пирĕн республикăра строительствăра ĕçлекен 2500 ытла предприятие шута илнĕ. Унта 28,6 пин çын вăй хурать. Пĕлтĕр строительство ĕçĕсене, 2012 çулхипе танлаштарсан, 2,4 процент ытларах пурнăçланă. Шупашкарта, тĕслĕхрен, çурт-йĕр 13,3 процент нумайрах хута кайнă. Кашни çын пуçне тивĕçекен лаптăка кура пирĕн тăрăх федерацин Атăлçи округĕнче – пĕрремĕш вырăнта.

«Чăваш Республикинчи çынсене кивĕ çурт-йĕр фондĕнчен çĕнĕ хваттерсене куçарасси» программăпа 2012-2013 çулсенче 554 çын /228 çемье/ пурăнмалли условисене лайăхлатнă. Вĕсене юхăннă 67 çуртран çĕнĕ вырăна куçарнă. Сăмах май, 2013-2017 çулсенче çак тĕллевпе 1,4 миллиард тенкĕ уйăрма палăртнă.

Йӳнĕрех хваттерсем çĕклес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлет республика. Пĕлтĕр 362,8 тăваткал метр хута кайнă. Кăçал строительсем çак кăтартăва тата лайăхлатасшăн.

**Мария РОМАНСКАЯ.**

ЯЛ ХУÇАЛĂХ

# Çĕр улми тупăш кӳрет

Çак эрнере Шупашкарти Андриян Николаев космонавт урамĕнчи Тĕп пасарта регионсен хушшинчи «Çĕр улми – 2014» VI курав иртрĕ. Унта хамăр тăрăхри хуçалăхсем кăна мар, Раççей 17 регионĕнчи, Германи, Голланди, Беларуç çĕр ĕçченĕсем хутшăннă.

Курава уçнă май республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев çĕр улми çыннăн рационĕнче пысăк вырăн йышăннине, халăх таса продукци шыранине, çак çимĕçрен хатĕрлекен апат ассортименчĕ пуянлансах пынине палăртнă. Чăваш Республикинчи çут çанталăк условийĕсенче çĕр улми çитĕнтерни тупăшлă пулни çинче чарăнса тăнă вăл. Çавна май хăватлă хальхи агротехнологисемпе усă куракан хуçалăхсем пахча çимĕç лаптăкне ӳстерсе пыни çинчен каланă. Михаил Васильевич çакăнта кăтартнă çĕнĕ технологисемпе паллашнă, çĕр улми сутакан вырăна çитсе курнă.

Курав вăхăтĕнчех ăслăлăх практика конференцийĕ, 5 «çавра сĕтел» йĕркеленĕ. Унта çĕр улмипе çыхăннă нумай ыйту тавра калаçнă.

**Марина ГРИГОРЬЕВА.**

ПĔТĔМ ХАЛĂХ ДИКТАНЧĔ

# Вырăс тата чăваш çырăвĕсене пĕлетĕр-и?

Пĕлтĕр пирĕн республика пĕрремĕш хут «Пĕтĕм халăх диктантне» хутшăнчĕ. Ăна тĕнчен тĕрлĕ кĕтесĕнче пурăнакансем вырăс чĕлхине мĕнле шайра пĕлнине тĕрĕслемешкĕн йĕркелеççĕ. Масштаблă акци кăçал ака уйăхĕн 12-мĕшĕнче, Космонавтика кунĕнче, иртĕ. Унта Раççейри 200 хула, пурĕ 45 пине яхăн çын, хутшăнма хатĕррине пĕлтернĕ. Хальхинче пĕтĕм халăха диктант çыртарас яваплăха Новосибирскри патшалăх университечĕн преподавателĕсемпе студенчĕсем хăйсем çине илĕç.

Пирĕн республикăра çыру пĕлĕвне лайăхлатас текенсене филологсем нарăсăн 21-мĕшĕнчен пуçласа кашни эрне кун И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУра кĕтеççĕ. Пулас диктантăн текстне кам хатĕрлесси хальлĕхе паллă мар-ха.

Вырăссем хыççăн чăвашсем те, 2300-е яхăн çын, пĕлтĕр хăйсен тăван чĕлхе грамматикине еплерех пĕлнине тĕрĕслерĕç. Диктанта Чăваш чĕлхин кунĕнче çырассине «Хыпар» издательство çурчĕ, Чăваш наци радиовĕ, И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУ, ЧР Вĕренӳ институчĕ, Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ йĕркелерĕç. Кăçал та ырă пуçарăва малалла тăсĕç. Ун çинчен тĕплĕнрех каярах пĕлтерĕпĕр.

**Анна ГЕРАСИМОВА.**

АСТĂВĂМ

# Паттăрсем йĕрсĕр çухалмаççĕ

**Шупашкарти 33-мĕш шкул, Раççей Геройĕ Николай Смирнов сержант ячĕллĕскер, паттăрăн амăшĕпе тĕл пулассине йăлана кĕртнĕ.**

**Çĕр-шыв хӳтĕлевçисен уявĕ умĕн Тамара Леонидовнăпа курнăçас шанăçпа Смирновсен хваттерĕ умне çитрĕмĕр. Хĕрарăмăн сывлăхĕ хавшанă-мĕн. Кĕçĕн ывăлĕ Геннадий пирĕнпе калаçма хавас пулчĕ. Тепĕр тесен, чирлĕ çыннăн ĕмĕр тӳрленми суранĕ çине тепĕр хутчен тăвар сапса пăлхатмарăмăр.**





## Кичемленме памаççĕ

«Анне Муркаш районĕнчи Кашмаш ялĕнче йышлă çемьере çуралса ӳснĕ. Асли пулнă май ун çине чылай йывăрлăх тиеннĕ. Мĕн пĕчĕклех колхоз уйхирĕнче, каярахпа фермăра дояркăра ĕçленĕ. Аттепе те кунтах паллашнă, пĕрлешнĕ. Николай çуралнă, вăл çулталăкра чухне çемье Шупашкара куçса килнĕ. Кунта тĕплениччен пиччене кукамай пăхнă. Атте те, анне те ĕмĕр тăршшĕпех агрегат заводĕнче ĕçленĕ. Ялта халĕ аннен шăллĕн çемйи пурăнать. Пĕчĕк чухне эпир Кашмаша вĕçĕмех çӳреттĕмĕр.

Аннен сывлăхĕ пиччешĕн куляннипех пĕтрĕ. Мĕн çамрăкран йывăр ĕçпе тертленни те витĕм кӳчĕ ахăр. Эпĕ авланнă хыççăн уйрăлса тухрăм, хулара урăх районта пурăнатăп. Сывăх çыннăмсем пекех, агрегат заводĕнче ĕçлетĕп. Анне патне кашни кунах кĕрсе тухатăп. Йăмăкĕ, Люба аппа, тата унăн упăшкипе хĕрĕ те вĕçĕмех çӳреççĕ. Аннене шкул ачисемпе учительсем те кичемленме памаççĕ, хуçалăхра пулăшаççĕ», – каласа кăтартрĕ Геннадий.

## Çирĕп чунлисенчен паттăрсем çуралаççĕ

Шупашкарти 33-мĕш шкулта вырăс чĕлхипе литератури вĕрентекен Раиса Пыркина – Смирновсем патĕнче кĕтнĕ хăна.

«Тамара Леонидовна пек çирĕп чунлă хĕрарăмсенчен çеç паттăрсем çуралаççĕ. Вăл хăй те – патриот, ывăлне те çавăн пек воспитани панă. Инкекĕшĕн никама та айăпламасть вăл. «Коля хăйĕн шăпине хăех суйларĕ пулĕ», – тет. Шкулта Тамара Леонидовна ачасемпе чылай тĕл пулу ирттернĕ, куççульленсе çемçешкеленмен, яланах хăйне тивĕçлĕ тытнă. Çамрăксене тăван çĕр-шыва юратма, ăна юрăхлă çын пулма чĕнет вăл», – палăртать Раиса Геннадьевна.

Амăшĕсен кунĕнче çулсеренех республикăри пограничниксен, афганецсен организацийĕсен ветеранĕсем те Тамара Смирновăна саламлама килеççĕ. Хĕрарăм пурне те ăшшăн кĕтсе илет. Коля ĕмĕрлĕхех çамрăк тăрса юлнă сăн ӳкерчĕксене пăхса, çартан янă çырусене пĕрле вуласа йăпанаççĕ. Вĕсене тата ывăлĕн наградисене арчара типтерлĕн упрать амăшĕ. «Тамара Леонидовнăпа калаçнă май вăхăт иртни те сисĕнмет. Ырă чунлă хĕрарăмран уйрăлас та килмест», – тет «Пограничниксен пĕрлĕхĕ» общество организацийĕн председателĕн çумĕ Анатолий Шорников.

## «Хĕрӳ» вырăнта

Николай Смирнов «Раççей Геройĕ» ята чăваш салтакĕсенчен чи пĕрремĕш тивĕçнĕ.

Вăл совет çарне Афганистана кĕртнĕренпе шăп 7 çул çитнĕ кун салтак атти тăхăннă. Анчах «хĕрӳ вырăна» чăваш каччи тӳрех çитеймен-ха. 1986 çулта раштав вĕçĕнче Туркестан çар округĕнче вĕренӳ курсĕ тухнă. «Халĕ эпĕ пулеметчик, анне, халĕ эпĕ – пограничник», – çырнă вăл амăшĕ патне. Çуркунне çамрăк салтак Афганистана лекнĕ. Кĕçĕн сержанта разведбатальонăн пулеметчиксен отделенийĕн командирне çирĕплетнĕ. Çар тивĕçĕ сăрт-туллă çĕрте, Афганистанпа Пакистан чиккинче иртнĕ. Хăрушлăхпа, вилĕмпе куçа-куçăн пĕрре мар тĕл пулма тивнĕ. Смирнов çар операцийĕсене хутшăннă, саперсен хăрушсăрлăхне сыхланă. Хăюллă çапăçнăшăн, тивĕçе пĕлсе пурнăçланăшăн ăна тĕрлĕ наградăпа чысланă. Вĕсене çакса 1988 çулта ентеш киле тĕрĕс-тĕкел таврăннă. Шел, ашшĕ ывăлне кĕтсе илеймен. Унăн вил тăприйĕ çине тăпра пăрахма Николай çартан килеймен. Раççей Геройĕн биографийĕн çак саманчĕ Н.Смирнов ячĕллĕ шкулта вĕренекенсен ĕçĕсенче курăнать.

## Ячĕ – вилĕмсĕр

«Лайăх ĕçе вырнаçма йывăрччĕ ун чух, шалу вăхăтра тӳлеместчĕç... Коля çаршăн тунсăхлатчĕ, – палăртать шăллĕ Геннадий. – 1994 çулта манăн та салтак атти тăхăнма вăхăт çитрĕ. Пичче те çав çулах контрактпа çара каймашкăн рапорт çырчĕ. Вăл ĕмĕрлĕхе куçне хупнă усал хыпар ман пата хĕсмете çитрĕ. Çакăн хыççăн яланлăхах киле ячĕç, анне пĕччен юлчĕ-çке...»

Саппасри кĕçĕн сержант Николай Смирнов Таджикистана ака уйăхĕнче çитнĕ. Ăна тӳрех Мускаври пограничниксен отрячĕн десантпа штурм маневр ушкăнĕн /ДШМУ/ отделенине ертсе пыма шаннă. Ушкăн пограничниксен постне – 25 Герой ячĕллĕ 12-мĕш заставăна – хӳтĕлессишĕн яваплă пулнă. 1993 çулта кунта хĕрӳ çапăçусем иртнĕ, пирĕн салтаксем нумайăн пуç хунă, погранзаставăна вĕсен ятне панă та. Ку лаптăк питĕ пĕлтерĕшлĕ вырăн шутланать: Курган-Тюбе, Куляб, Душанбе хулисене, айлăмсене иртсе çӳрекен çула хупать. 1994 çулта çурла уйăхĕн 18-мĕшĕнче унта тепĕр хут Раççей пограничникĕсен юнĕ тăкăннă. Çакăн пирки Дмитрий Белебенцев журналист тĕплĕн çырса кăтартнипе паллашма тӳр килчĕ. «Тург тăвĕ... Унăн сулахай енне Таджикистан спецназĕ хуралланă. Сылтăмминче – тĕппинче – Раççей икĕ офицерĕпе 20 десантник-пограничник. Перкелешӳ çурлан 15-мĕшĕнчех пуçланнă. Хурахсем çине тăрсах тĕп позицие ярса илме талпăннă. Тăхлан çумăрĕ икĕ куна пынă. Смирнов чи хĕрӳ те хăрушă, яваплă лаптăксенче хӳтĕленнĕ. 12 сехете яхăн тăсăлнă тан мар çапăçура пирĕн ентеш паттăрсен вилĕмĕпе пуç хунă. Пограничниксен хастарлăхĕ хурахсене чикĕ урлă иртме паман».

Мускаври погранотрядăн 12 заствин хăюлăхне тăван çĕр-шыв пысăка хурса хакланă. РФ Президенчĕн Указĕпе килĕшӳллĕн 5 десантник-пограничник «Раççей Геройĕ» ята тивĕçнĕ, вăл шутра – пуç хунă Смирнов кĕçĕн сержантпа çар командирĕ Вячеслав Токарев лейтенанта та. Николайăн ылтăн çăлтăрне упрамашкăн амăшне панă.

Паттăр ентешĕмĕр пирĕн хушăра çук пулин те вăл халĕ те стройра çар тивĕçне пурнăçлать тейĕн – Мускав отрячĕн ДШМУ 2-мĕш заставине Николай Смирнов ятне панă. 1995 çулта Тамара Леонидовнăна кун пирки çырупа пĕлтернĕ. Ентеш пурăннă çурт çине мемориал хăма вырнаçтарнă. Афган вăрçин ветеранĕсем çулсеренех Герой ячĕпе волейбол турнирĕ ирттереççĕ.

**Алина ИЗМАН.**

ЫЙТĂМ

# Мĕскер парнелем-ши, мăшăрăм, сана?

**Çĕр-шыв хӳтĕлевçисен кунĕ умĕн пур хĕр-хĕрарăм парне шыраса ăшталанма пуçлать. Сывăх çыннăн кăмăлне çапах та тупас килет-çке.**

**Хальхинче эпир ĕçлĕ арçынсенчен асра юлнă парне пирки ыйтса пĕлтĕмĕр.**



**Александр МОКРУШИН, Чăваш Республикин çар комиссарĕ:**

– Тӳрех аса та илейместĕп... Сунарпа е пулă тытассипе çыхăннă хатĕр-хĕтĕр-ши? Сывăх çынсем чун киленĕçĕ пирки лайăх пĕлеççĕ те кăмăла тивĕçтерме тăрăшаççĕ. Эпĕ «диванпа» туслă çын мар, активлă кану суйлатăп. Кăçал Чăваш Ен комиссариачĕ çар учетне йĕркелесе пырас енĕпе Раççейре 1-мĕш вырăн йышăнчĕ. Уяв тĕлне çакă пирĕншĕн – чи пысăк парне.



**Юрий КИСЛОВ, Раççей ача-пăча фончĕн регион уйрăмĕн председателĕ, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ:**

– Ĕçтешсем одеколон, хырăнма кирлĕ хатĕрсем парнелеççĕ. Мăшăр куллен усă курмалли япаласем /галстукран пуçласа нуски таранччченех/ хатĕрлет. Эпĕ пуринпе те кăмăллă. Тĕрĕссипе, пĕчĕк парне те савăнтарать мана.



**Александр ЕГОРОВ, йĕлтĕрпе чупассипе СССР спорт мастерĕ, ЧР тава тивĕçлĕ тренерĕ:**

– Парне-и?.. Темĕн каламалла ĕнтĕ... Хама кăна пырса тивекенни пирки уççăн пĕлтерес те килмест. 10-ри хĕрĕм хăй аллипе тем те пĕр ăсталаса вĕçĕмех савăнтарать-ха. Ывăлăмсем ӳссе çитрĕç ĕнтĕ, пурнăçне çарпа çыхăнтарчĕç, иккĕшĕ те – офицер. Çавăнпа пирĕн çемьешĕн нарăсăн 23-мĕшĕ – пысăк уяв. Пĕр-пĕрне шăнкăравласа та пулин саламлатпăр. Асли ача чухнех йĕлтĕрпе чупатчĕ, спорт мастерĕ ята тивĕçрĕ. Эпĕ хам та салтак атти тăхăннă çын. Халĕ воспитанниксен çитĕнĕвĕпе савăнса пурăнатăп, татах тăрăшуллисем килессе шанатăп. Сире те хĕл иртсе кайиччен йĕлтĕрпе ярăнма чĕнетĕп.

Журналистсен ĕçне пысăка хурса хаклатăп. Разведчиксем пекех эсир, темĕн те ыйтса пĕлетĕр. Чăваш халăхне валли кăсăклă информаци шыратăр. Çавăнпа та пулĕ сирĕн кăларăма çынсем кĕтеççĕ, вулаççĕ.



**Юрий ИСАЕВ, Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн директорĕ, филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ:**

– Мăшăрпа 20 çул ытла тату пурăнатпăр. Уяв умĕн туйăмсем ахаль кунри пек мар, пĕрремĕш тĕл пулури евĕр тата та вăйланаççĕ. Чĕре кăлт-кăлт тапма пуçлать. Мăшăршăн та, маншăн та мĕн парнелени пачах та пĕлтерĕшлĕ мар. Киле валли, хамăра мĕн кирлине çемьепе палăртатпăр та пĕрле тухса туянатпăр. Паллах, парнесĕр хăвармасть арăм. Уяв сĕтелĕ те хатĕрлет, эпĕ ăна май пур таран пулăшатăп.



**Сергей ПАВЛОВ, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ:**

– Хăть те мĕнле парне хаклă маншăн. Мăшăр килте кирлĕ хатĕр-хĕтĕр илсе парать. Сăмахран, дрель парнеленĕччĕ. Унсăр хваттерте юсав пуçлаймăн. Çăмăл машинăри хушма япаласем те – видеорегистратор, антирадар... – ырă сунса панă парнесем.



**Аристарх ДМИТРИЕВ, поэт, куçаруçă:**

– Чи лайăх, чи сумлă парне вăл – çывăх çынсен юратăвĕ, хисепĕ. Урăх нимĕн те кирлĕ мар, кĕтместĕп те. Нарăсăн 23-мĕшне уяв пек йышăнмастăп. Арçын вăл салтак, унăн кирек хăçан та çĕр-шыва хӳтĕлеме хатĕр пулмалла.

**Алина ИЗМАН,**
**Елена АТАМАНОВА,**
**Марина ТУМАЛАНОВА.**





ТЕАТР

# Моцартсем, Чайковскисем, Пушкинсем мĕншĕн çуралмаççĕ?

**Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Чăваш патшалăх çамрăксен театрĕнче Мария Ладо пьеси тăрăх лартнă «Ирпе, автан авăтсан» спектакле 10 çул кăтартаççĕ. Пирĕн тăрăхра кăна мар, Раççейри тата чикĕ леш енчи театрсенче те хапăлласа йышăнаççĕ**



**ăна. Çакăнта хальхи пурнăç чăнлăхне тавăрса кăтартнă. Хĕрне ача пăрахтарни те ним те мар хальхи ашшĕ-амăшĕшĕн. Пĕртен-пĕр тĕпренчĕкне чухăн çыннăн ывăлне качча парас вырăнне аслă шкула вĕрентме кĕртесшĕн вĕсем. Çуралма ĕлкĕреймен пепкерен хăтăлсан йăлтах хăйĕн вырăнне ларассăн туйăнать пурлăхшăн хапсăнаканскерсене. Хуçалăхри выльăх-чĕрлĕхпе Лекçейĕн ашшĕ, ўсĕр çапкаланчăк, çеç çакна хирĕç. «Вĕсем çарамас çўремеççĕ, апла пулин те татах çи-пуç туянасшăн», – хăйсен хушшинче тĕлĕнсе калаçать килти чĕр чун. Çынсемшĕн вара пурлăх нимрен хаклă. Юрать-ха пирĕштие çаврăннă Лекçейĕн ашшĕ çуралман мăнукне вĕлерме памасть. Хăйĕн çине алă хурса тепĕр чуна çăлса хăвармалла пулса тухать унăн.**

*Çак спектаклĕн пĕлтерĕшĕ пирки режиссерпа артистсем мĕн шухăшланине пĕлес килчĕ. Хальхи пурнăçри çакнашкал лару-тăрăва мĕнлерех хаклаççĕ вĕсем?*

**Станислав ВАСИЛЬЕВ, Çамрăксен театрĕн тĕп режиссерĕ:**

– «Ирпе, автан авăтсан» спектакльте выльăх тата этем тĕнчине танлаштарса кăтартрăмăр. Мĕнешкел пысăк уйрăмлăх вĕсен хушшинче. Выльăх çут çанталăк йĕркипе пурăнать. Йĕри-таврари кашни пулăм кăсăклă уншăн. Этемшĕн укçа малти вырăнта. Хĕвел, пĕлĕт çине пăхма та, тавралăх илемĕпе киленме те манса пырать вăл. Ăна цивилизаци хăвачĕ туртса илнĕ. Ахальтен мар пĕр ăслай аса килчĕ. «Юлашки вăхăтра Моцартсем, Чайковскисем, Пушкинсем мĕншĕн çуралмаççĕши», – Пўлĕхçĕрен ыйтать халăх. «Эпĕ сире ярса паратăп. Эсир хăвăр çуратмастăр», – тет вăл. Иртĕхсе пурăнма пуçланăран хырăм пăрахаççĕ халĕ. Темиçе ачана ура çине тăратма укçа-тенкĕ çитерейменсрен шикленеççĕ. Эпир ултăн çитĕннĕ. Апла пулин те çи-пуççăр та, выçă та çўремен. Ĕлĕк те хĕрарăмсем 6-8-шар пепке çуратнă, вĕсене ура çине тăратнă. Халĕ малтанхинчен япăхрах пурăнатпăр-и? Чĕре айĕнче тĕвĕленнĕ ачаран хăтăлнине кам ырлатăр? Çын тĕрĕс мар çул суйланине кăтартать çакă.

Выльăхпа чĕр чун тĕнчине çыхăнтарни те сăнарлă. Ас тăватăр-и, Иисус Христос витере çуралнă. Çакăнти сывлăшпа ăшăнса вăй илнĕ. Тĕнчене чĕрĕ чун килниех – калама çук пысăк савăнăç. Хырăм пăрахни – турă парнине йышăнманнипе танах.

Ку спектакле чăвашла кăна мар, вырăсла та кăтартма пуçларăмăр. Çакăнти ĕç-пуçа аслă класра вĕренекенсем те тишкерме, сўтсе явма, хак пама пултарĕç. Вĕсен ашшĕ-амăшне те шухăшлаттарĕ, йăнăш утăм тăвасран сыхланма пулăшĕ çак ĕç.

**Лидия КРАСОВА, Чăваш халăх артистки:**

– Пĕрре шухăшласан тĕлĕнсе каймалла: хăшĕ-пĕришĕн ача пăрахасси – хĕвел çаврăнăш хуппине сурса кăларассипе пĕрех. Апла тăк амăшĕпе çуралман пепке хушшинчи çыхăну вăйсăр.

Ĕне сăнарне калăплама малтан йывăртарах пулчĕ. Унăн сăмахĕсем çук. Выльăхăн чунне хускану тăрăх уçмалла. Ача чухне пасара сутма илсе каякан ĕне куççульпе йĕнине аса илтĕм. Йăлтах туять вĕт-ха вăл. Пăрушне касса кăларни те – хăйне вĕлернипе танах уншăн.

Выльăх-чĕрлĕх ачасене юратать. Пĕчĕккисем те чĕрĕ чуншăн каççах каяççĕ. Çавăнпах вĕсем пĕр-пĕриншĕн темĕнле йывăрлăха та парăнтарма хатĕр.

Спектакльте чăн пурнăçа кăтартнă. Ашшĕ-амăшĕ выльăх сутса укçа тăвасшăн. Çав вăхăтрах ачи-пăчи мĕнле пурăннипе кăсăкланма та вăхăт çитмест вĕсен...

**Светлана САВЕЛЬЕВА, Чăваш халăх артистки:**

– Лаша сăнарĕн пĕлтерĕшĕ çинчен шумай шухăшланă. Унăн нумай тыткаларăшне сцена çине кăларасшăнччĕ. Çапах та режиссер ун урлă çыннăн пурнăçне те кăтартма сĕнчĕ.

Хырăм пăрахнин сиенĕ çинчен шухăшлама пĕлмест хăшĕ-пĕри...

**Василий ПАВЛОВ, Чăваш халăх тата Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ артисчĕ:**

– Кўршĕ сăнарĕпе «Чĕнтĕрлĕ чаршав» конкурсра та çĕнтернĕччĕ эпĕ. Çапах та ўсĕр çапкаланчăк ачана упракан пирĕшти пулма пултарать-ши? Çак ыйту тавра ĕçтешсемпе те нумай тавлашнă. Унăн чунĕ пуян. Çакă ăна ыттисенчен пĕр шит çўлерех çĕкленме пулăшать. Апла тăк вăл, манăн шухăшпа, пирĕштие çаврăнма тивĕçлĕ.

Хăть те мĕнле пулсассăн та çут çанталăк йĕркинчен иртме юрамасть. Ача ашшĕ-амăшĕшĕн нихăçан та ытлашши пулас çук.

Транспорта ларсан та «Ирпе, автан авăтсан» спектакльти Кўршĕ сăнарĕ пуçран тухмасть. Ирĕксĕрех хамăн та куççуль капланса килет...

**Марина ТУМАЛАНОВА.**

АЛ ĂСТИ

# «Манăн пуканесем те пуянччĕ...»



– Ал ĕçне эпĕ шкулта вĕреннĕ чухнех юрататтăм. Манăн пуканесем те чухăн пулман, пĕрмай юлашки модăпа тăхăнса «çўретчĕç». Мĕн кăна çыхса тăхăнтартмастăмччĕ-ши вĕсене, çавăнпа та гардеробĕ калама çук пуянччĕ, – тет Ольга Ларина.

Хăй калană тăрăх, шкулти ĕç урокĕсем нумай пулăшнă ăна. Пушă вăхăт тупăнсанах пĕчĕкскер алла йĕппе çип тытнă. Çитĕнсе пынă май тĕрлĕ юбка-кофта çыхма тытăннă. Унсăр пуçне картинăсем тĕрленĕ, вĕтĕ шăрçапа çыхнă. Çăм та йăваласа пăхнă. Ал ĕçĕ киленў çеç кўнĕ.

Ултă çул каялла çекĕлпе çыхма пуçланă. Çакă йăлтах ăнсăртран журнал туяннинчен пуçланнă. «Çекĕлпе çыхасси маншăн юратнă ĕç кăна мар, пĕтĕм пурнăç та», – терĕ куравра Ольга Георгиевна.

Республикăри халăх пултарулăхĕн çуртĕнчи 6х7 галерейăра ал ăстин куравне йĕркеленĕ.

Мĕн пур ĕçе чунĕ витĕр кăларакан ăстаçăран вĕренмелли нумай. Çавна май çыхма кăмăллакансене хăй тавра пуçтарать Ольга Георгиевна. Малтан хулари Маяковский ячĕллĕ вулавăшра улах ларнă, халĕ «Салют» культура керменне пухăнаççĕ. Ал ăсти вĕренекенĕсем валли ятарлă программа хатĕрленĕ. Малтанхи çул кунта çўрекенсем çыхас ăсталăха хăнăхаççĕ пулсан иккĕмĕш çул кăткăс япаласем ăсталама пуçлаççĕ.

ЧР Культура министерствин централизациленĕ библиотекинче бухгалтерта тăрăшакан Ольга Ларина республикăри чылай конкурспа курава хутшăннă.

– Халь сутлăхра темĕнле хитре тумтир те пур. Çапах та хăв çыхни вĕсенчен уйрăларах тăрать тата чуна та çывăхрах, – тет Ольга Ларина.

**Елена АТАМАНОВА.**

ПУÇАРУЛĂХ

# Хăюллисем сас парасса шанаççĕ

Студентсен отрячĕсем пирĕн çĕршывра иртнĕ ĕмĕртех йĕркеленнĕ. 1959 çулта аслă тата ятарлă вăтам пĕлў паракан шкулсенче вĕренекенсем Казахстана çерем уçма тухса кайнă. Хастар комсомолсем БАМА çĕкленĕ. Çамрăксен туслă çакăн евĕр йышне Совет студенчĕсен отрячĕсем, кĕскен ССО, тенĕ.

14-15 çул каялла та студентсене Волгоград, Краснодар, Аçтăрхан тăрăхне пахча çимĕç пуçтарма илсе каятчĕç-ха. Кăмăллăн таврăнатчĕç унтан. Каярах, ял хуçалăхĕсем арканнă, харпăрлăха куçса пĕтнĕ май, кăнтăр енне чĕнме пăрахрĕç.

Раççей студенчĕсен отрячĕсем пирĕн çĕр-шывра халĕ те пур. Ĕлĕкхисенчен кая та мар пулĕ вĕсем. Хура тинĕс хĕрринчи ачасен сывлăхне çирĕплетекен лагерьсемпе санаторисенче официантра, тирпейлўçĕре, Краснодар тата Мускав облаçĕнчи ача-пăча лагерĕсенче вожатăйра, хореографра, шывра ишме вĕрентекенре, физрукра тăрăшаççĕ çамрăксем. Çуллахи вăхăтра Раççей чукун çулйĕрĕ çинче проводникре ĕçлеççĕ.

«Раççей студенчĕсен отрячĕсем» Пĕтĕм Раççейри çамрăксен общество организацийĕн Чăваш Енри уйрăмĕ 12 çул каялла йĕркеленнĕ. Асăннă организаци республикăри аслă тата ятарлă вăтам пĕлў паракан вĕренў заведенийĕсен студенчĕсене пĕрлештерет. Пĕтĕмпе педагогика 23 отрячĕ Шупашкарта. Вĕсенчен чылайăшĕ çуллахи вăхăтра хамăр республикăри ачасен лагерĕсенче вожатăйра ĕçлет. Аяккалла тухса каякан та чылай. Тĕслĕхрен, «Арт-студи» 20 студент-воспитателĕ ака уйăхĕн вĕçĕнче Азов тинĕсĕн хĕрринчи ача-пăча санаторине кайма палăртать. Çул хакне, унта пурăннăшăн та ĕç паракан саплаштарать.

Проводнике вĕренме пĕлтĕр 140 çын валли квота уйăрнă.. Вĕсенчен 70-шĕ çеç ĕçе вырнаçнă. Сăмах май, проводнике тўлевсĕр вĕрентеççĕ. Çамрăксем 20-шер пин тенкĕ те ĕçлесе илнĕ Раççей чукун çул-йĕрĕ çинче. Çапах та каникул вăхăтĕнче пуйăспа «ярăнас» шухăшлисем сахалрах студентсен хушшинче. Çамрăксен пуçарулăх центрĕнче çуллахи сесси вĕçленнĕ тĕле хăюллисем сас парасса кăçал та шанаççĕ. Инçе çула икĕ-виçĕ талăк каякан пуйăсра кам кăна çук пулĕ. Вĕсемпе пĕр чĕлхе тупма, юрама та пĕлмелле, çамрăксен ку енĕпе ăсталăхĕ сахалрах, имĕш.

Студентсен отрячĕсем çавăн пекех республикăри слет-фестивале хутшăнаççĕ, ача çурчĕсемпе реабилитаци центрĕсене, интернат шкулсемпе ача-пăча больницисене тухса çўреççĕ, ыр кăмăллăх акцийĕсем ирттереççĕ. Хĕл Мучи академийĕ кашни çулах аван ĕçлет.

Шупашкарти Çамрăксен пуçарулăх центрĕнче çулсерен вожатăй ăсталăхĕн шкулне йĕркелеççĕ. Кунта çамрăксене вĕренмелли нумай. Кашни студент хăйĕн ĕçĕ-хĕлĕ, йăнăшĕсемпе ăнăçăвĕсем пирки каласа кăтартать.

Студент отрячĕсен тумĕ мĕн пур регионра расна. Пирĕннисем симĕс тĕслĕ куртка суйласа илнĕ. Унпа кашнине тивĕçтерме те ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ.

Вожатăйра кăна мар, строительствăра тар тăкакан студентсем те пур отрядра. Иртнĕ çул чăваш хастарĕсем Сочири Олимпиадăна тата Хусанти Универсиадăна хатĕрленнĕ пулсан кăçал студентсенчен чылайăшĕ шыв илнĕ регионсене тухса кайĕ. Строительство бригадисене хатĕрлеме тытăннă та ĕнтĕ.

**Елена БАШКИРОВА.**



АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР



### Сырпа кăлпасси кексĕ

**3 çăмарта, 70 грамм маргарин, 1 чей кашăкĕ апат соди, 1,5 стакан турăх, 1,3 стакан çăнăх, 150 грамм сыр, 100 грамм кăлпасси кирлĕ.**

Çăмартана ирĕлтернĕ маргаринпа, апат содипе, турăхпа, çăнăхпа пăтратмалла. Сыра теркăламалла, кăлпассие тăваткаллаca касмалла. Сырпа кăлпассие чустана ямалла. Çак хутăша маргарин сĕрнĕ формăна куçармалла. Кекса духовкăра 30 минут пĕçермелле.

### Ирис

**4 апат кашăкĕ сахăр, 2 апат кашăкĕ хăйма, 1,5 апат кашăкĕ тип çу кирлĕ.**

Хăймапа сахăра пăтратмалла. Çак хутăша вăйсăр çулăм çинче вĕреме кĕртмелле, унтан тип çу хушмалла. Тăтăш пăтратса 20 минут пĕçермелле. Кăшт сивĕнсен çаврашкасем тумалла е канфет формине ямалла.

### Шалча пăрçи салачĕ

**Консервланă 1 банка шалча пăрçи, 50 грамм сухари, пуçлă 2 сухан, 3 кишĕр, тип çу, майонез кирлĕ.**

Сухана çурма çаврашкан турамалла. Кишĕре теркăламалла. Суханпа кишĕре тип çупа ăшаламалла. Çимĕçсене майонезпа пăтратмалла.

### Какайпа, мăйăрпа

**500 грамм пăру какайĕ, 6 çăмарта, 250 грамм аçтăрхан мăйăрĕ, пуçлă 2 сухан, 200 грамм сухари, 2 апат кашăкĕ тип çу, 200 грамм майонез, тăвар, пăрăç кирлĕ. Илемлетме 1 гранат хатĕрлемелле.**

Пĕçернĕ какая, çăмартана тăваткаллаca турамалла. Аçтăрхан мăйăрне ăшалаcа вĕтетмелле. Сухана çурма çаврашкан касса ăшаламалла. Çимĕçсене майонезпа пăтратмалла, тăварпа пăрăç сапмалла. Салата гранат вăррипе илемлетмелле.

### Тинĕс купăстипе, çăмартапа

**Консервланă 1 банка тинĕс купăсти, 2-3 çăмарта, консервланă 1 банка симĕс пăрçа, майонез кирлĕ.**

Пĕçернĕ çăмартана тăваткаллаca турамалла. Çимĕçсене майонезпа пăтратмалла.

### Çарăк нимĕрĕ

**10 çарăк, 40 грамм услам çу, авăртнă 1/3 стакан сухари, 3 çăмарта, 1/3 стакан хăйма, тăвар кирлĕ.**

Хуппинчен тасатнă çарăка тăвар хушнă шывра пĕçерсе тĕмелле. Нимĕре услам çупа, сĕтпе, сухарипе, çăмартапа пăтратмалла. Çак хутăша тип çу сĕрнĕ çатмана ямалла, хăйма сĕрмелле. Çарăк нимĕрне 10-15 минутлăха духовкăна лартмалла.

### Ветчина салачĕ

**200 грамм ветчина, пĕçернĕ 2-3 çăмарта, 2-3 шăл ыхра, 2-3 апат кашăкĕ майонез, 100-200 грамм сыр кирлĕ.**

Ветчинана çӳхен касмалла. Çăмарта саррипе шуррине уйăрмалла. Сыра теркăламалла. Ыхрана вĕттĕн турамалла. Сырпа ыхрана, çăмарта саррине майонезпа пăтратмалла. Çак хутăша ветчина çине хумалла, рулет евĕр çавăрмалла.

ПĔЛЕТĔР-И?

# Кулинар вăрттăнлăхĕ

**Ку е вăл апат-çимĕçе мĕн чухлĕ пĕçермелле? Рецептсенче ытларах чухне «хатĕр пуличчен» тесе çыраççĕ. Çапах та апат техĕмлĕ те тутлă пултăр тесен кашни кил хуçинех ăна мĕн чухлĕ пĕçермеллине пĕлмелле.**

Тĕслĕхрен:
пăру какайне – 1,5 сехет;
ĕне какайне – 2,5-3 сехет;
сысна какайне– 1,5 сехет;
чăхха – 1 сехет;
сурăх какайне – 2-2,5 сехет;
çĕр улмине – 20-30 минут;
кишĕре – 20-25 минут;
хĕрлĕ кăшмана – 1 сехет;
купăстана – 30-50 минут;
тĕслĕ купăстана – 20 минут.



# Çатма тутăхать

**Çуралнă кунпа чукун çатма парнелерĕç. Эпĕ унпа тăтăш усă куратăп. Анчах нумаях пулмасть çав хатĕр тутăхнине асăрхарăм. Çакăн сăлтавне пĕлесчĕ.**

**Яна К.**

Чукун çатмана вĕри шывпа тата щеткăпа /тимĕррипе мар/ çумалла, унтан ал шăллипе сăтăрса типĕтмелле, тип çу сĕрмелле. Тепре усă курнă чухне ăна малтан хĕртмелле. Савăтсапа çумалли машинăна чиксен вăл пушшех тутăхать. Ăна нӳрĕк вырăнта тытмалла мар. Унсăр пуçне çавнашкал çатмара апат-çимĕç упрама юрамасть.

ЫЙТУ-ХУРАВ

# Тĕк сăвăсĕнчен



**Чăх сăвăсне асăрхарăм. Вăл каярахпа, тĕкĕпе усă курнă чух, минтере те куçас хăрушлăх пур. Кайăк-кĕшĕк умĕнчен хĕлĕнçăвĕн йывăç кĕлĕ таталмасть. Кӳкĕрт те хурса патăм. Кăпшанкăран пĕрех хăтăлаймарăмăр.**

**З.НИКОЛАЕВА.**

Кăнтăрла чăхсене урама кăларăр. Çав вăхăтра витене дезинфекцилĕр. Сăмахран, тĕтĕм шашкипе усă курма юрать. Икĕвиçĕ кун çапла майпа кĕрешсен сăвăс пĕтмеллех. Тепĕр мел те пур. 2 витре йывăç кĕлне алланă 1 витре хăйăрпа хутăштармалла, 1 флакон акарацид çăнăхĕ /ветеринари аптекинче сутаççĕ/ хушмалла та витери куритене ямалла.

АШШĔ-АМĂШНЕ



# Ача пӳрне ĕмет

**Манăн пепке 8 уйăха çитрĕ. Анчах çаплипех пӳрне ĕмет. Йĕркеллĕ-и çакă? Ку йăларан мĕнле хăптармалла-ши ăна?**

**Лариса С.**

Пĕчĕккисен 80 проценчĕ пӳрне ĕмĕт. Выçсан, канăçсăрлансан, ывăнсан çапла майпа лăпланма тăрăшать вăл. 9 уйăх тултарнă тĕле пепкесенчен чылайăшĕ çак йăларан хăех хăтăлать: ансат пĕр-пĕр ĕçе хăнăхнă май ача сасартăк пӳрне ĕмме пăрахать.

ВУЛАКАН СĔНЕТ

# Ешчĕкри йăран

Калча лартмашкăн çĕре тĕрĕс хатĕрлемелле.

1 пай çерем тăприне çĕрĕк тăприпе /2 пай/, 2-шер стакан хăйăрпа, йывăç кĕлĕпе пĕрлештеретĕп. Çакăн пек хутăшра сывлăш та, нӳрĕк те çителĕклĕ, çавăнпа та ӳсен-тăрана лайăх апатлантарать вăл. Сиенлĕ микроорганизмсене пĕтерме тăпрана малтанах вĕрекен шывпа пăшăхлатăп. Вăрра ешчĕке акатăп та кантăкпа витсе хуратăп, чӳрече ани çине лартатăп. Унта сывлăш температури кăнтăрла 12-15 градус ăшă тăрать, каçпа – 8-10. Çакăн пек чухне калча парка та сивве чăтăмлă ӳсет. Сывлăш температурине майĕпен 20 градуса çити ӳстеретĕп. Чӳрече умĕнче сутă çителĕклĕ. Ешĕл хунав тăсăлнăçемĕн тăпра хушатăп, пӳлĕме час-часах уçăлтаратăп. Сывă калча тĕксĕм симĕс тĕслĕ, тымарĕ çирĕп аталанать.

**П.СПИРИДОНОВА.**

Канаш районĕ.

# Кӳршĕллĕ пахча çимĕç

Пахча çимĕç туса илмелли лаптăка эпĕ 4 пая уйăратăп. Пĕринче купăста, хăярпа тăсăкла кавăн лартатăп. Ку культурăсене органика имçамĕ чылай кирлĕ, çавăнпа та çĕре тислĕкпе, çĕрĕк тăприпе е компостпа пулăхлатмалла. Иккĕмĕшĕнче помидор, баклажан, пăрăç, сухан, ыхра, редис, симĕс пахча çимĕç валли вырăн хăваратăп. Çаксем пĕрремĕш лаптăкрисем пекех им-çама «хапсăнмаççĕ». Виççĕмĕшне – унта кишĕр, хĕрлĕ кăшман, петрушка, патиссон, çарăк акатăп – минерал удобренийĕпе апатлантаратăп. Юлнă вырăна çĕр улми лартатăп, унти тăпрана та органика им-çамĕ кирлĕ.

**В.ГРИГОРЬЕВА.**

Елчĕк районĕ.

# Хут çинчи вăрлăх

Çак ĕçе эпĕ хĕлле, пушă вăхăт тупăнсанах, тытăнатăп. Шыв лайăх çăтакан хутран 2,5-3 сантиметр сарлакăш хăю касатăп. Çавăн пекех крахмалпа çăнăхран çилĕм хатĕрлетĕп. Хăю çинче вăрă сапмалли вырăна кăранташпа паллă тăватăп. Кайран хута çăра çилĕмпе йĕпететĕп те акма тытăнатăп. Вăрăсен хушшине мĕн чухлĕ хăварасси культурăран килет. Сăмахран, кишĕре, редиса тата петрушкăна пĕрпĕринчен – 5-6, çарăкпа кăшмана – 10, çулçăллă сельдерее – 5, тымарлине – 20, купăстана – 50, укроппа петрушкăна – 2, сухана 5 сантиметртан акмалла. Анчах та вăрлăх пахалăхĕ иккĕлентерсен вĕсен хушшине 2-3 хутчен пĕчĕклететĕп. Хăйăва лайăх типĕтетĕп, чĕркетĕп, культура ятне çырса пир хутаçа чикетĕп. Типĕ те усă вырăнта упратăп. Çуркунне йăран хатĕрлесен лакăма çав хăйăва тăсса хуратăп кăна. Çиелтен тăпрапа витетĕп, шăваратăп. Çакăн пек мелпе ака хăвăрт вĕçленет, вăрлăх та перекетленет.

**Т.АНТОНОВА.**

# Йывăç кĕрпинчи калча

Хăяр калчине йывăç кĕрпи çинче ӳстересси анлă сарăлчĕ.

Кун валли йывăçăн пур кĕрпи те юрăхлă мар. Вĕттине, сăмаласăррине, синтетика сăррипе çилĕмсĕррине суйламалла. Малтанах марганцовка хушнă вĕри шывпа пăшăхлатăп, йывăç кĕрпине ешчĕке яратăп. Тарăнах мар путăка вăрă акатăп. Çиелтен йывăç кĕрпипе витетĕп, пусăрăнтаратăп. Хăяр шăтса тухиччен ешчĕке полиэтилен хутаçпа витетĕп. Кун пек чухне урăх им-çам та кирлĕ мар. Калча ӳстермелли питĕ ăнăçлă мел çакă. Пикировка тунă чухне ӳсен-тăранăн тымарĕ пĕртте сиенленмест. Анчах та пахча çимĕçе ытлашши ӳстермелле мар, мĕншĕн тесен куçарса лартнă хыççăн вăл вăй илеймесен те пултарать. Икĕ эрнери калча усă вырăна куçарса лартмашкăн чухах.

**Р.ПЕТРОВА.**



ЧУНРИ

# Пĕрремĕш юрату

Пире, вуннăмĕшсене, çав кун ир-ирех вăрман уçланкине йывăç лартма ячĕç. Пĕр рете икшерĕн тăма хушрĕç. Каччăсем чавса пыраççĕ, эпир, хĕрсем, лартатпăр. Миша рет вĕçне хăвăртрах тухать те мана пулăшма пикенет. Класра нихăçан та çывăх калаçса курманскерпе кун тăршшĕпе мĕн кăна сӳтсе явмарăмăр-ши? Шкул хыççăн çар училищине кайма хатĕрленет-мĕн. Хамăр шкултах савнă хĕрĕ те пур, анчах та чунне уçма вăтанать.

Кăнтăр вăхăтĕнче пурте пĕрле туслăн апатланма лартăмăр. Арçын ачасем пĕр чарăнми шӳтлерĕç. Валерий Павлович пĕрремĕш юратăвĕ пирки каласа кăтартрĕ. Шкулта çĕр улми пуçтарнă чухне хăйĕнчен аслăрах хĕре куç хывнă вăл. Нумай çул туслă çӳренĕ унпа. Аслă шкула та пĕрлех вĕренме кайнă. Çул урлă каçнă чухне хĕре машина çапса хăварать. Шел те, хăтарса хăвараймаççĕ. Тен, çавăнпа час-часах тунсăха путатчĕ вĕрентекен. Çемье çавăрманччĕ вăл. Пĕрмай пирĕнпе чунне уçнăран, сас хăпартманран юрататтăмăр ăна. Вăрçнине те ас тумастăп, кашни сăмахне итлесе унăн куçĕнчен çеç пăхса тăраттăмăр. Физикăпа математика урокĕсенче шăна вĕçни те илтĕнместчĕ. Начар вĕренекен ача та çукчĕ класра.

Кăнтăр апачĕ хыççăн каллех ĕçе пикентĕмĕр. Миша шыв йăтса пулăшрĕ, эпĕ тĕмсене шăвартăм. Уçланкă тавра çӳллĕ юмансем кашласа ларнăран эпир тӳпене пĕлĕтсем капланнине асăрхаман та. Ĕç те вĕçленнĕпе пĕрехчĕ ĕнтĕ. Çӳхе тăхăннăскерсем йывăççем айне пытантăмăр. Никам та сунчăк илме шухăшламан. Миша пиншакне хывса ман çине уртса ячĕ. Эпĕ аванмарланнине сиссе Валерий Павлович ман пата утса пычĕ те ăшшăн кулса илчĕ. «Пиншак хывса панишĕнех вăтанма кирлĕ мар ĕнтĕ. Ним япăххи те çук кунта. Пулас салтаксем аптрамаççĕ», – тесе вăтă хурама айĕнчи каччăсен ушкăнне кĕрсе тăчĕ.

Эрне кун Миша шкула килмерĕ. Чирленĕ терĕç. Хама пурнăçра пĕрремĕш хут айăплă туйрăм. Пиншакне мана хывса парса хăй кĕпе вĕççĕнех çумăр айĕнче тăчĕ-çке. Икĕ кунран çитсе ларчĕ вăл. Чиперех туять хăйне, кăмăлĕ те аван. Эпĕ тинех лăплантăм. Доска умĕнче задача шутласа «5» паллă илчĕ.

Тепĕр кунне ман сĕтел хушшинче вырăн пушахчĕ те – Миша юнашар пырса ларчĕ. Уроксем хыççăн юлса шкулпа сыв пуллашакансен кунĕ тĕлне стена хаçачĕ кăлартăмăр. Пĕр-пĕринпе мĕнле туслашса кайнине хамăр та сисмерĕмĕр. Шкул столовăйĕнче сĕтел пĕрле хатĕрлетпĕр. Класра дежурнăй чухне иксĕмĕр урай çăватпăр. Тăхтав вăхăтĕнче теннис вылятпăр. Вулавăшран тухма пĕлместпĕр. Миша шкула килмен кун тунсăх пусать. Юрату мар пуль, туслăх амаланчĕ пирĕн хушăра.

Вун пĕрмĕш класа кусрăмăр. Миша пилĕк çухрăмри ялтан шкула çӳренĕрен эпĕ ăна çăвĕпех курмарăм. Авăн уйăхĕнче çеç тăраниччен калаçрăмăр. Валерий Павлович та пирĕн туслăхшăн хĕпĕртетчĕ. Сыв пуллашу каçĕнче те пĕрлеччĕ эпир. Миша пĕрремĕш хут киле ăсатрĕ. Утмăл турат чечекĕ парнелерĕ. Юрату çинчен мар, малашнехи ĕмĕтсемпе тĕллевсем пирки калаçрăмăр эпир. Алла ăшшăн чăмăртанипе хăй çумне çепĕççĕн çупăрланисĕр пуçне нимĕн те пулман пирĕн хушăра. Пĕр-пĕрне савнине сăмахпа каламасăрах пĕлеттĕмĕр. Çар училищинчен çыру çырма сăмах пачĕ юлашкинчен. Эпĕ те кăштахран вĕренме тухса вĕçтертĕм. Çыру хыççăн çыру шăрçаларĕ Миша. 8-мĕш класранах юратса пурăннине куçран калама вăтаннă вăл. Вăхăт шурĕ. Алла диплом илнĕ хыççăн аппа хăй патне ĕçлеме илсе кайрĕ. Темле майпа Мишăпа çыхăну татăлчĕ.

Вунă çул иртрĕ унтанпа. Шкулта пĕлтĕр тĕл пулу йĕркелерĕмĕр. Миша мана курсан хумханчĕ пулин те пурин умĕнче те ăшшăн ыталаса пит çăмартинчен чуп турĕ. Чечекне те манса хăварман. Кашниех пирĕнтен сăмах каларĕ. Акă Мишăна черет çитрĕ. Пурин умĕнче те чунне уçрĕ вăл. Пĕрремĕш юратăвне çухатни пирки те каламасăр хăвармарĕ. «Сан пата миçе хутчен пырса каймарăм-ши, анчах та тĕл пулаймарăм. Шăпи çапла пулчĕ пуль», – терĕ вальс ташланă май. Валерий Павлович мăшăрĕпех килнĕччĕ. Класа ертсе кĕчĕ пире. Парта хушшине вырнаçрăмăр. Миша ман çума пырса ларчĕ те парта айĕнче «сана çеç юрататăп» тесе çырнине тупса кăтартрĕ. Класс ертӳçи асăрханă ăна, Миша çырнине те пĕлнĕ, çавăнпах çак тарана çитсе хуратман.

Эпир чун тĕпĕнче пĕр-пĕрне халĕ те саватпăр. Туслăха упраса хăварни те пысăк телей. Шкулти савни пушă самант тупăнсанах шăнкăравлать ман пата. Ĕçлеме, пурăнма, юратма хавхалантарать. Çуралнă кунра, уявсенче чи малтан саламлаканни те вăлах. Эпĕ те унăн сассине илтмесенех пĕр-ик кун тунсăхлатăп. Арçынпа хĕрарăм хушшинчи туслăха тинех ĕненме пуçларăм.

**Елена ВУТĂШПИ.**

АХ, АНЧАХ...

# Çунатсăр ĕмĕт

Петĕр Зини шкул хыççăн Шупашкарти пир-авăр комбинатне вырнаçни ялта чылайăшне тĕлĕнтерчĕ. Вăл пĕчĕкренех лайăх вĕреннĕ, çулсерен класс старостинче тăрăшнă. Пĕрре, яла килсен, шкул директорĕ те сăмах пуçарчĕ унпа. Мĕншĕн малалла вĕренме ăнтăлманни ăна та шухăшлаттарать иккен. Аякранах курнă пулсассăн, тен, ăçта та пулсан пăрăнса кĕрĕччĕ хĕр. Çук вĕт, куçа-куçăн тĕл пулмалла пулса тухрĕ. «Мана ĕçлеме ытларах килĕшет», – тӳрре тухма хăтланчĕ хайхискер.

Зинăн ашшĕпе амăшĕшĕн те кĕтменлĕх пулчĕ çакă. Аслă хĕрĕ пекех Зина та малалла вĕренме каясса кĕтнĕччĕ вĕсем. Тĕрĕссипе, вĕрентекен пулма ачаранпах ĕмĕтленнине пытарман кĕçĕнни. Класа журнал йăтса кĕнине, вĕренекенсем ăна ура çине тăрса кĕтсе илнине, уроксем хыççăн тетрадь тĕрĕсленине куç умне мĕн чухлĕ кăларман пулĕ вăл...

Хăйсен ялĕнчен çичĕ çухрăмри вăтам шкулта вĕренме пуçласан улшăнчĕ Зинăн шухăш-кăмăлĕ. Алгебрăпа геометри килĕшетчĕ ăна. Хăйсен шкулĕнчи Людмила Георгиевна хавхалантарса пыни, кашни темăна тĕплĕ ăнлантарни витĕм кӳчĕ пулинех. Çĕнĕ çĕрте вара пачах урăхла лару-тăру-мĕн. Алгебрăпа геометри вĕрентекенĕ – ватăрах арçын. Вăл ачасене тарăн пĕлӳ пама ăнтăлнине туймарĕ Зина. Вĕрентекен урока кая юлса килни те, задачăсене хăйсен тĕллĕн шутлама хушни те, çĕнĕ темăна кĕнеке тăрăх ăша хывма ыйтни те çирĕплетрĕ çакна. Мухмăр-сухмăр пуçпа урок ирттерме йывăртарах пуль çав.

Пĕрре тата пăтăрмаха çакланчĕ Зина. Астрономи вĕрентекен Виталий Петрович коридор вĕçĕнчи хăйĕн пӳлĕмне чĕнчĕ ăна. Урокра усă курмашкăн ятарлă хатĕр-хĕтĕр йăттарса ярасшăн пулчĕ. Мĕн кăна çук-ши унăн пӳлĕмĕнче? Ун-кун пăхса тăнă вăхăтра Виталий Петрович хĕре хыçалтан ыталаса илчĕ, кăкăрĕнчен тытрĕ. Çакна кĕтмен пике самантлăха çухалса кайрĕ. Унтан арçын тыткăнĕнчен хăтăлса çĕмрен пек тухса вирхĕнчĕ пӳлĕмрен. Юрать урок пуçланнă – коридорта çын çук. Класа кĕмерĕ вăл. Аякри ялтан килекен ачасем валли уйăрнă общежити еннелле чупрĕ. Ыттисем киличчен ниçта та тухмарĕ Зина.

Юрать-ха унăн сумкине те йăтса килнĕ тантăшĕсем. Вăл урока мĕншĕн кĕменнине пĕлесшĕн пулчĕç хĕрсем. Зина пулса-иртнине йăлт каласа кăтартрĕ.

Çакăн хыççăн Виталий Петровичăн урокĕсене кĕресшĕн те марччĕ вăл, çапах хĕрсем çине тăнипе парта хушшине вырнаçса ларчĕ те кĕнеке вуланă пек туса пуçне пĕкрĕ.

Çăвартан тухнă сăмах таçта та çитет теççĕ. «Санпа калаçасшăнччĕха эпĕ. Виталий Петрович мана та хăйĕн пӳлĕмне илсе кĕртнĕччĕ. Унта хыпашлама пуçланăччĕ. Çакăн çинчен урăх никампа та калаçман...» – Зинăна урамра чарса чунне уçрĕ çак шкултах вĕренекен Оля. «Тен, директора пĕлтермелле?» – çакнашкал шухăш патне пырса тухрĕç вĕсем. Анчах вăрттăнлăха уçма тăхтарĕç. Иккĕшĕ те экзаменсене ăнăçлă тытса шкулпа хăвăртрах сыв пуллашма ĕмĕтленчĕç.

Алла аттестат илсен Зина Шупашкара çул тытрĕ. Аслă шкула вĕренме кĕрес темерĕ вăл. Çав кĕтменлĕх хыççăн чунĕ пушанса юлчĕ унăн. Ачалăхри ĕмĕчĕ те илĕртӳллĕ туйăнмарĕ, çунат хушаймарĕ.

**Нина ДАНИЛОВА.**
Вăрнар районĕ.

КУН ПЕК ТЕ ПУЛАТЬ

# Арăма юраймарăм...



**Çав кун юлташ патĕнче хăналанман пулсассăн мĕнле çаврăнса тухĕччĕ-ши манăн шăпа? Ун чухне пĕр чиперккепе паллашрăм. Çапла ăнсăртран юрату авăрне лекме пултарнине хăшĕ-пĕри ĕненмест те пулĕ. Çав хĕре пĕрре курса ĕмĕрлĕхе юратрăм...**

Аллăн кăмăлне тупмашкăн мĕн кăна хăтланман пулĕ эпĕ? Радио урлă ун ячĕпе юрă янратма ыйтаттăм. Ăна спектакле, кинона чĕнеттĕм. Чечек илме нихăçан та укçа шеллемен. Савăт-сапаран пуçласа аялти кĕпе-йĕм таранах илсе парнеленĕ савнине. Хăш чухне кĕсьере пĕр пус та юлмастчĕ. Çаканшăн та пăшăрханман. Арçынна мĕскĕнленни килĕшмест. Лекцисем хыççăн суту-илӳ тытăмĕнче хамăн вырăна шырарăм. Кредит илсе киоск уçрăм. Савни пирĕн хутшăнăва вăйă вырăнне йышăннине пĕле тăркачах ăна качча тухма ыйтрăм. «Мĕн, апат пĕçерсе ĕçрен кĕтсе лармалла-и сана? Çук, маншăн ирĕклĕх хаклăрах», – пытармарĕ вăл. Эпĕ, паллах, çине тăраймарăм. Хам çаплипех пуçа çухатасла саврăм ăна.

Тĕл пулма пуçланăранпа 3 çул иртсен Аллăн çие юлчĕ. Чĕре айĕнче пепке тĕвĕленни çинчен ир енне пĕлнĕ вăл. «Май пур таран хăвăртрах çырăнмалла пирĕн», – вăратрĕ савниçĕм мана. Пĕлсе çитер хĕрсене: пĕрре качча тухасшăн мар, тепре вăйпах Мăшăрлану кермене сĕтĕреççĕ. Килĕшрĕм ĕнтĕ. Çынсем килтен ĕçе тухса кайиччен эпир ыйту çырмашкăн черет йышăнма тухса утрăмăр. Ăхă, çăкăртăварпах кĕтсе тăраççĕ пуль пире унта... Тата пирĕнсĕр пуçне кам пырса тăтăр хупă алăк патне? Тахăш самантра Аллăн тăварланă хăяр çиес килсе кайрĕ. Килте пурччĕ-ха та. Çук, çие юлнăскерĕн кĕтме хал çук имĕш. Мĕн тетĕр – лавккаран пĕр банка хăяр çĕклесе килтĕм. Аран-аран уçрăмăр вĕт ăна. Пĕр-ик хăяр çисенех савнин ăшĕ выртрĕ.

Мăшăрлансан пушшех лавккана тăтăш хăвалама пуçларĕ вăл мана. Ыйхă вĕçтерсе гранат, пан улми, сăра... илме чупаттăм. Сивĕ пĕр сăмах та каласа кӳрентермен ăна. Эпĕ хам апат пĕçерейместĕп-и? Кĕпе-йĕм çăваймастăп-и? Вырăн таврашне тирпейлесе хăвараймастăп-и?

Икĕ хĕр çуратса пачĕ вăл. Çакăншăн Аллăна ĕмĕрĕмĕр тав тăвăп. Манăн та парăмра юлас килмерĕ. Икĕ хутчен çăмăл машина парнелерĕм юратнă арăма. Унсăр пуçне кашни çул Крымра канмашкăн путевка илсе патăм. Темшĕн урăх çĕре каясшăн пулмарĕ вăл. Сăлтавне кайран тин пĕлтĕм – унта Алла еркĕн тупнă. Чылай çул мана улталаса пурăннă хыççăн арăм уйрăласшăн пулчĕ. Ман çума çыхса хуман вĕт ăна – çук, хирĕçлемерĕм. Хăйĕн чĕри хушнă пек пурăнтăрах вăл.

Ачасем унпа пĕрле кусса кайма килĕшмерĕç. Чăнах, мĕн çухатнă вĕсем ют тăрăхра? Хĕрĕмсем амăшĕпе Интернет урлă хутшăнаççĕ. Калаçчăрах чун каниччен! Тĕпренчĕксем çитĕннĕ ĕнтĕ. Кĕçех вĕсем хăйсем те çемье çавăрĕç.

Манăн кил те, ачасем те, юратнă ĕç те пур. Пуç та ыратмасть, ăш та вăркамасть. Çумра юратнă хĕрарăм çукки кăна чуна пусарса тăрать...

**ВАЛЕРИЙ.**




*Лидия САРИНЕ*

Анук аппан мăшăрĕ çĕре кĕни чылай пулать. Ачисем те пурте ўссе çитĕннĕ, тĕнче тăрăх саланнă темелле. Сакăр вунă çултан иртнĕ хĕрарăм пĕчченех пурăнать. Апла пулин те ала усса лармасть вăл. Хуçалăхне те тытса тăрать, пахча-анкарти тулли çимĕç çитĕнтерет. Май килнĕ таран ачисене пулăшма тăрăшать. Ватă çынна нумай кирлĕ-и? Ачисене, уйрăмах мăнуксене вара... ай-яй, сахал мар кирлĕ.

Амăшĕ нихăшне те кўрентермест. Унщăн пулсан ачин ачисем – ылтăн тĕпренчĕкĕсем. Пенси илсен йăлт салатать. Вĕсем яла килсен калама çук хытă хĕпĕртет Анук аппа. Ялта ĕçĕ нумай-çке. Вăй вара чаксах пырать. Хулара пурăнакан мăнукĕсем яла питех çўресшĕн мар çав. Канлĕрех пурăнма хăнăхнăскерсем ялти ĕç-пуç патне питех пырасшăн мар. Юрать ачисем пăрахмаççĕ амăшне, май килнĕ таран пулăшаççĕ. Пахча çимĕçе вăхăтра лартса хăвармалла, вăхăтра пуçтарса илмелле. Унсăр пуçне кил-çурт таврашĕнче ĕç темĕн чухлех мар-и...

Юлашки вăхăтра вăл час-часах манма пуçларĕ. Пĕр-пĕр япалана тытсан хăш чухне ăçта та пулин хурса ярать те – ниепле те тупаймасть. «Çакăнтах хутăм-çке, ăçта кайса кĕчĕ-ши?» – шухăшлать ватă çын. Кайран тупăнать паллах. Е пўрт умне, чăлана тухсан пĕр самант шухăша кайса тăрать: «Мĕн патне тухрăм-ха? Мĕн пит кирлĕччĕ?» Çук. Ниепле те пуçа килмест. Каялла пўрте кĕрсен çеç аса илет. Эх, ара...

Паян вăл иртенпех тĕпелте тĕрмешет. Кĕçĕн ывăлĕ Сергей çитнĕ. Вăл час-часах килсе çўреймест амăшĕ патне. Хулара пурăнать пулин те. Ытти нумай çамрăк пекех вăл Мускава ĕçлеме каять. Ывăлне чунтан шеллет амăшĕ, ăна вăратас мар тесе шăппăн утса çўрет. Тăван килте сайра пулакан Сергей кăнтăрлаччен çывăрчĕ. Анук аппа ун валли мĕн те пулин тутли, халĕччен çимен апат, пĕçерсе янтăласшăн. Пуллине те, ашне те хатĕрлерĕ. Хĕрлĕ пулă туяннăччĕ. Ăна кинĕ вĕрентнĕ пек çăнăхра йăваларĕ, сăрапа, çупа, хăймапа пăшăхларĕ. Пўлĕме тутлă шăршă сарăлчĕ. Сергей вырăн çинчен тăрса ларчĕ. Çитĕ çывăрса. Хĕвел хĕртсе пăхать. Амăшĕ ывăлне сĕтел хушшине йыхăрчĕ. Çăвăнса тасалнă хыççăн арçын апат çиме ларчĕ. Анук аппа ывăлĕн ĕçĕ-хĕлĕ пирки ыйтса пĕлчĕ. Çисе тăрансан арçын телевизор умне вырнаçрĕ, диван çинче выртакан хаçатсене пăхкаларĕ.

– Так, анне, манăн кайтарас пуль, паян пĕрле ĕçлеме çўрекен юлташсемпе тĕл пулмалла, – ура çине тăчĕ Сергей, – кафене кайса ларасшăн-ха.

– Каймалла пулсан каятăн пуль вара? – ывăлне куçран пăхрĕ амăшĕ. – Нўхреп тасаттарасшăнччĕ те, сарайне çумăр анать тата.

– Нўхреп тасатма ятарласа килĕп, анне.

– Чей ĕç-ха, эппин, пылпа чей ĕç, – хыпăнчĕ Анук аппа. – Ашне çисех яр.

– Хăв çи, анне. Эпĕ тăрантăм. Чей ĕçме юрать. Кофе пĕтнĕ-и, илсе килмеллеччĕ-çке. Пĕлмерĕм.

– Эй, эпĕ çийĕп-ха. Каяс çын мар.

Амăшĕ шкапран кивелсе сарăхнă, хытă хуплашкаллă кĕнеке кăларчĕ, ăна уçрĕ. Кĕнеке хушшинче – тирпейлĕн пуçтарса хунă симĕс хут укçасем. Сергей ячĕшĕн тенĕ пек ялти хыпарсем çинчен ыйтса пĕлчĕ. Анук аппа ывăлне 1 пин тенкĕ пачĕ. Ытти укçине танлаштарса, майласа хучĕ.

– Акă, тыт. Ку сана. Ас ту, ан çухат. Шалти кĕсьене чик.

– Мĕн укçи? Анне, кирлĕ марччĕ ĕнтĕ.

– Мана килсе курнăшăн, – шўтлерех калаçрĕ амăшĕ. – Кăçал «вагонка» туянасшăн-ха.

Ывăлĕ амăшĕ панă укçине куртка кĕсйине чикрĕ. Тĕкĕр умне пырса тăчĕ, çўçне тураса якатрĕ. Ывăлĕ çине пăхса тăракан амăшĕ хăй сисмесĕрех вăрăммăн сывласа илчĕ. Куç илми пăхать вăл, ывăлĕн кашни хусканăвне сăнать. Сергей ун-кун пăхкаларĕ, нимĕн те манса юлман-и тенĕн кĕсйисене тĕрĕслерĕ. Алăк патне çитсе чарăнса тăчĕ.

– Юрĕ вара, анне, эпĕ чуптартăм. Хăвах пĕлетĕн вĕт, каймалла.Васкатăп питĕ.

– Каймалла пуль çав, мĕн тăвас тетĕн? – хаш сывлать ватă çын хăй сисмесĕрех.

– Тепрехинче, анне, курсах тăр, килти ĕçсене йăлт туса хăварап.

– Эй, ĕçĕ вăл...

Вĕсен куçĕсем тĕл пулчĕç. Çăтăрр! чĕпĕтсе илчĕ арçын чĕри. Çав самантра унăн амăшне çупăрлас, пуçне унăн кăкăрĕ çине хурас килчĕ. Анук аппан хăмăр куçĕнчен халь-халь куççуль пăчăртанса тухать. Мĕн пек юратса, çав вăхăтрах питĕ шеллесе пăхать амăшĕ тăван тĕпренчĕкĕ çине.

– Тăхта-ха, ачам, – ывăлĕн çўçĕ çумне çыпçăннă тĕке илсе пăрахрĕ хĕрарăм. Кайма тесе алăк хăлăпне тытнă Сергей сасартăк тăп! чарăнса тăчĕ. Тем шухăшларĕ. Унтан курткине хывса хучĕ. Юнашар çакăнса тăракан кивĕ пиншака уртса ячĕ те пўртрен хăвăрт тухрĕ.

– Карттус тăхăнмаллаччĕ, ывăлăм. Пуçу шăнать! – терĕ Анук аппа.

– Мана сивĕ мар, – илтĕнчĕ çенĕхрен. Кунĕпех ĕçлерĕ Сергей. Амăшĕ унпа танах ĕштеленчĕ. Калама çук хĕпĕртенĕскер ларма-тăма пĕлмерĕ. Каç кўлĕм тин çула пуçтарăнчĕ ывăлĕ.

– Ай, мансах кайнă, – хыпăнчĕ Анук аппа. – Ара, ачасем валли кучченеç туянмалăх... Ме-ха, тыт, – пин тенкĕ кăларса ывăлне пама тăчĕ вăл.

Чăрр! пăхрĕ Сергей. Манса кайрĕ иккен... Амăшĕ сĕннĕ укçана илме хăю çитерейменĕ вăл. Укçине панине ас тумасть ватă çын.

– Çук, çук, анне. Ирхине пин тенкĕ патăн-çке, ас тумастăн-и?

– Çук пуль? Нимĕн те ас тумастăп. Ил, ил. Çул укçи пултăр. Мана пулăшрăн халь...

– Кирлĕ мара ан калаç-ха, анне. Юрĕ. Эпĕ кайрăм. Чипер юл, анне. Лайăх пурăн.

Амăшĕ хапха умĕнче ывăлне çурăмĕнчен чылайччен пăхса тăчĕ. Сергей та çаврăнса пăхрĕ, унтан уттине хăвăртлатрĕ...

Сулхăн çил Анук аппан тутăрĕ айĕнчен тухса тăракан вĕтĕ çўç пĕрчисене сапалама хăтланчĕ. Ах, çав куççуле... Юрать-ха ывăлĕ курмасть. Мĕн тума кулянтарас ăна? Ахаль те çăмăл мар ачасен пурнăçĕ. Киле кĕме васкамарĕ хĕрарăм. Вăрахчен тăчĕ. Ывăлĕ кайнăшăн ыратакан чунне çил кăна лăпкаса ачашларĕ тейĕн. Пĕчĕк ачана лăплантарнă евĕр пĕр вĕçĕм пуçĕнчен, çурăмĕнчен лăпкарĕ...

## САВĂ СĔВЕМĔ

*Анатолий ЮМАН*

### Юрă

Çиле майăн ылтăн çулçăсем вĕçеççĕ,
Иртнĕ çамрăк вăхăта ас илтереççĕ.

Епле ырăччĕ, тўлекчĕ çурхи каçĕ, –
Çепĕç туйăмсем çаплах асран каймаççĕ.

Пахчара чечек саратчĕ шурă çĕмĕрт,
Малалла чуна чĕнетчĕ çутă ĕмĕт.

Ăшă çил çўçе шăлатчĕ, ачашлатчĕ,
Сарă хĕр куçран пăхатчĕ, йăл! кулатчĕ.

Юрату мана яланлăхах тухатрĕ,
Эпĕ пур – савăннипе ăса çухатрăм.

Ешĕл тумлă чĕлтĕр! çамрăк вăхăт иртрĕ,
Арлă-арăмлă çу кунĕ килсе çитрĕ.

Умлăн-хыçлăн ачасем çитĕннĕçемĕн,
Кăмăлĕ тулса çитет ĕçри этемĕн.

Çулçă ўкнĕ пек вĕсем ўссе саланчĕç,
Çырă çўçĕм шухăшпа кĕç чăпарланчĕ.

Сисĕнмесĕр килсе çитрĕ кĕр асапĕ,
Юлашки çула кĕç кам пăхса ăсатĕ?..

Çамрăк вăхăт, эс ăçта кайса çухалтăн?..
Эп сана аса илсе чунтан хурлантăм.

Çиле майăн ылтăн çулçăсем вĕçеççĕ,
Иртнĕ ылтăн вăхăта ас илтереççĕ.

*Галина КĔМĔЛ*

Хур кайăксем çўлте вĕçеççĕ
Пĕр йĕрпелен, çине-çине.
Вĕсем хаваслăн пĕлтереççĕ:
– Ак çитнĕ ăшă çуркунне!

– Хур кайăксем, кунта пăхсамăр! –
Эп кăшкăратăп ал сулса. –
Ман тунсăха çилпе сапалăр,
Чуна хăварăр йăпатса.

Мана малта телей çеç кĕттĕр,
Çуталтăр çутă çăлтăр пек.
Çурхи шывпа пур хурлăх çĕттĕр,
Çумран çухалтăр пур инкек.

Хур кайăк пек ялан вĕçесчĕ
Çўл тўпере çунат сарса.
Хур кайăк сасси пек кĕресчĕ
Çынсен чунне, телей сунса.



## ВУЛАКАН ПУЛТАРУЛĂХĔ

*Маргарита ПРОКОПЬЕВА*

### Упра мăшăрна

Çумра пулсассăн савнă мăшăр,
Нихçан ан сивĕт хăвăнтан.
Сăлтав пулсан та ан тавлашăр,
Ан манăр – иксĕр те пĕр тан.

Ăш сăмахсем калама тăрăш,
Хирĕç ан кай ун кăмăлне.
Кўрентерсен – тăватăн йăнăш,
Хĕрўлентер ун туйăмне.

Култарĕ те вăл савăнтарĕ,
Чи кирлĕ çын вăл çемьере.
Темле ĕçе те парăнтарĕ,
Куратăр – татрĕ тимĕре.

Çак пирĕн пурнăç никĕсленнĕ
Этем ĕçе юратнипе.
Çемье кашнийĕн çирĕпленнĕ
Юратура вăй пуррипе.

### Санпа кăна

Юрату хĕмне туятăп
Пĕр санра кăна.
Хам ăраскала тупатăп
Пĕр санпа кăна.

Иксĕлмест ман вăй-хăватăм
Эс пĕрле чухне.
Тĕрекленчĕ ман çунатăм –
Вĕçрĕм тўпене.

Йывăр пурнăç çăмăлланĕ
Эс çумра пулсан.
Санпа çеç чун хăватланĕ
Шанчăкпа тулса.

*Светлана НИКИТИНА*

### Никамшăн та пулман эп акăш

Никамшăн та пулман эп акăш.
Илтмен: "Чĕкеçĕм, юратап сана".
Тен, ăнсăртран кăна пуль тахăш
Чĕнейнĕ урăх ятпала мана.
Хам пурнăçа эп хурламастăп,
Çумра ыр мăшăр, савнă
ачамсем.
Ĕçре ывăннине туймастăп,
Йывăрлăхра манмаççĕ тусăмсем.
Хам ятăмпах юласчĕ манăн,
Хитре ятсемшĕн эпĕ тĕмсĕлмен.
Чунпа ялан таса пулсассăн
Этемшĕн турă ырлăх
шеллемен.
Хитре ятсем нумай, пĕлетĕп:
Хĕвел, çут уйăх, хĕрлĕ
кĕл чечек
Эп пур пĕр хам ятпа çўретĕп –
Вăл хăй те çутă йăлтăр
хĕвел пек.

ПУРНĂÇА УЛĂШТАРМА МЕХЕЛ ÇИТЕРНИСЕМ

# «Манăн ěмěт пур...»



**Мартин Лютер Кинг АПШ афроамериканěсен граждан прависене хӳтěлемешкěн çěкленнě пěрремěш кěрешӳçě тесен пěрре те йăнăш пулас çук. Оратор пултарулăхěпе палăрнăскер ентешěсене расизма хирěç алла хěç-пăшал тытса мар, мирлě майпа кěрешме чěнсе каланă. Епле пулсан та юн юхтармалла мар! Çакă унăн тěп принципě пулнă. Америкăра расăна кура хěсěрленине вирлěн питленě вăл. АПШ Вьетнама хирěç вăрçă пуçарнине уççăн сивленě. Америка обществинче демократи тытăмне аталантарассишěн ăнăçлă ěçленěшěн 1964 çулта Мартин Кинг Нобель премине тивěçнě. Унăн тěллевě-ěмěчě çапла пулнă: раса тěлěшěпе сиксе тухакан хирěçӳсене пачах пěтересси, çěр-шывра халăха "хури" "шурри" çине пайламасăр аталанмашкăн пěр пек майсем туса парасси.**

## Мартин Лютер Кинг

Мартин ашшě Майкл Кинг баптистсен Атлантăри /Джорджи штачě/ чиркěвěн пасторě пулнă. Пастор 1934 çулта Европа тăрăх çул çӳреве тухнă май Германире те пулса курнă. Унта нимěç чаплă реформаторěн, протестантизм юхăмне йěркеленě, Библие латин чěлхинчен нимěçле куçарнă Мартин Лютерăн вěрентěвěпе паллашнă. Хайхин шухăшěсем питě килěшсе кайнипе пастор хăйне те, пиллěкри ывăлне Майкла та унăн ятне пама шухăш тытнă. Çапла вěсене Мартин Лютер Кинг Асли тата Мартин Лютер Кинг Кěçěнни тесе чěнме пуçланă. Анчах ята улăштарни хитре утăм кăна пулман. Малашне вěсем иккěшě те нимěç священникěн вěрентěвне ăша хывса унăн çулěпе утма тěв тунă. Калас пулать, палăртнине пурнăçланă.

Арçын ача шкула çӳреме пуçласан вăл ăс-тăн енěпе ыттисенчен уйрăлса тăнине палăртнă вěрентекенсем. Мартин Кěçěнни вěренӳре аван ěлкěрсе пынă, экзаменсене чи лайăх паллăсемпе кăна тытнă, чиркӳ хорěнче юрланă. Вунă çулти арçын ачана "Унесенные ветром" кинофильмра юрламашкăн чěннě. Вун виççěре Мартин Атланта университечě çумěнчи лицее вěренме кěнě. Икě çултан вара Джорджи Афроамерикан союзě йěркеленě ораторсен конкурсěнче çěнтернě. Арçын ачан пултарулăхě çăл куç евěр тапса тăнă. Çакна вăл 1944 çулхи кěркунне тепěр хут ěнентерме пултарнă – Мартин Морхауз колледжне вěренме кěмешкěн вăтам шкул программи тăрăх экзамен экстерн майěпе тытнă.

1947 çулта Мартин баптистсен чиркěвне ěçлеме кěнě, ашшěн Мартин Лютер Кинг Аслин пулăшаканě пулса тăнă. Анчах та вěренме пăрахман. Çулталăкран Мартин Кěçěнни колледжра социологи енěпе бакалавр степеньне тивěçнě, унтан Честер /Песильвани штачě/ теологи семинарине вěренме кěнě. 1951 çулта унта бакалавр степеньне тивěçнě. Хальхинче – турă сăмахě енěпе. Кунпа та лăпланман-ха каччă. Черетлě утăм – Бостон университечě. 1955 çулта вăл философи ăслăлăхěсен тухтăрě пулса тăнă.

Ěнтě вěренсе çитнě темелле. Апла çанă тавăрса ěçлеме вăхăт. Мартин Лютер – баптистсен Монтогомерири /Алабама штачě/ чиркěвěнче ěçлеме пуçлать. Шăпах çавăнта пуçланать те Америкăри хура ӳтлисем хăйсен прависемшěн кěрешӳ пуçласси. Кěрешӳçěсен ертӳçи – Мартин Лютер Кинг. Халăх пăлханасси вара çапла пуçланнă. Хура ӳтлě Роза Пакăна... автобусран тухма ыйтнă. Хěрарăм хирěçленě: унăн та прависем Америка ытти гражданěсемпе пěр тан. Хулара пурăнакан хура ӳтлисем пурте Роза енне тăнă. Вěсем татăклă утăм тунă – автобуссене бойкот пěлтернě. Хирěçтăру çулталăк ытла тăсăлнă. Мартин Лютер тăрăшнипе ěçпуç Аслă суда çитнě. Суд хура ӳтлисен енне тăнă – Алабамăра конститутцие пăснине йышăннă. Влаçăн ирěксěрех парăнма тивнě.

Кěрешӳ кăтартса панă – влаçпа вăрçăнмасăрах, юн юхтармасăрах кěрешме кăна мар, çěнтерме те пулать. Çакăн витěмне Мартин Кинг ěнентерме пултарнă. Çěнтерӳ хавхалантарнă. Мартин Кěçěнни кěрешěве малалла та аталантарма палăртнă. Хура ӳтлисен ыттисемпе танах вěренмешкěн те ирěк пур. Çакăншăн йěркеленнě те кěрешӳ. Вăл пуçарнипех АПШ Аслă судне каллех тавăç çитернě. Явап тытакансем – "хурисене" "шуррисемпе" пěрле вěренме ирěк паман штатсен ертӳçисем. Мартин каллех çěнтернě. Суд йышăнăвě тăрăх – тěрлě раса çыннисене уйăрса вěрентни каллех Америка конституцийěпе килěшсе тăмасть.

Паллах, çакă пěр йěрсěр иртме пултарайман. Хура ӳтлě оратор, проповедник – вăл калаçнине итлеме ӳт тěсне уйăрмасăрах тěрлě раса çыннисем пинě-пинěпе пуçтарăннă – тěлěшпе ăна курайманнисем сунара тухнă. "Хурисемпе" "шуррисене" пěрле вěренме ирěк пани пушшех те тивěçтермен вěсене. 1958 çулта черетлě хут халăх умěнче калаçнă чухне Мартина кăкăртан çěçěпе чикнě. Арçынна больницăра çăлса хăварма май килнě. Анчах та проповедник çакăн хыççăн та хăйěн çулěнчен пăрăнман. Ун çинчен хаçатсем çырнă, ăна телекурава кăларăмсене тăтăш чěннě. Мартин Лютер Кинг Кěçěнни политика паллă деятелě пулса тăнă. Ун хыççăн пур штатри хура ӳтлисем те утма хатěр пулнă.

1963 çулта Мартина общество йěркине пăснă тесе айăпланă, Бирмингем тěрмине хупса хунă. Анчах читлěхре вăрах тытма май килмен – арçын криминалпа çыхăннине ěнентерекен фактсем тупайман. Çав çулах Мартин Кинга АПШ президенчě Джон Кеннеди йышăннă. Çěр-шыв ертӳçипе тěл пулнă хыççăн Мартин Лютер Капитоли умěнчи картлашкасем çине çěкленнě те унта пухăннă пин-пин çын умěнче: "Манăн ěмěт пур..." – тенě. Çакă хăйне евěр сăмах çавăрăнăшě пулса тăнă.

1968 çулхи пуш уйăхěнче Мартин Мемфисра черетлě хут демонстрацире тухса калаçнă. Кинг Кěçěнни шăпа кӳрентернисене Вашингтона илсе кайма хатěрленнě. Çак вăхăтра ăна пăшалран пенě. Хальхинче арçын вилмеллех суранланнă. Çухату ытла та йывăр пулнă. Америка хура ӳтлě гражданěсем хăйсен хӳтěлевçине çухатнă. Вăл вара пěр тан праваллă çěр-шыв пирки ěмěтленнě. Çакăншăн хăйěн пурнăçне те шеллемен.

Халě Америкăра кăрлач уйăхěн виççěмěш вырсарни кунěнче Мартин Лютер Кинг кунне паллă тăваççě. Вăл наци уявě шутланать.

## Мăшăрěн çулěпе

Анчах та паттăр вилсен унăн ячě кăна мар, ěçě те юлать. Пěр танлăх ялавне Мартин Лютер Кинг мăшăрě Коретта Кинг ярса илет. Вăл расизма, колониализма, дискриминацие хирěç кěрешӳ пуçарать. Çавна май упăшкин меслечěсемпех усă курать – юн тăкмасăр, вăрçăнмасăр...

Коретта Скотт Кинг пěтěм пурнăçне çынсене халалланă. Вăл вăхăтра Африка халăхěпе хутшăнма питě йывăр пулнă. Коретта Африка баптисчěсен пěрремěш ертӳçисенчен пěри пулса тăнă. Вăл тытăннă ěç яланах ăнăçлă вěçленнě. АПШ хура ӳтлисен ирěкěшěн кěрешсе пуçне хунă Мартин Лютер Кингăн мăшăрěн тивěçне вăл чыслăн пурнăçланă.

Коретта Алабама штатěнчи Перр Каунтире çуралнă. Ашшě-амăшě фермерсем пулнă. Виçě ачаллă çемье ура çинче çирěп тăнă. Вěсен хăйсен грузовик тата йывăç материалсен склачě пулнă.

Коретта пуçламăш вăтам шкул хыççăн Линкольнра вěреннě. Каярахпа хăйсенчен 14 километртра вырнаçнă Мэриона куçнă. Хура ӳтлисене вěренме ирěк панă шкул çывăхра текех пулман. Каярахпа хěр Йеллой-Спиргс /Огайо штачě/ Антиох колледжěнче ăс пухнă. Стипенди выляса илнěскере Бостон /Массачусетс/ консерваторине куçараççě. Унта Коретта вокал тата сěрме купăс енěпе диплом илет. Унтах пулас мăшăрěпе Мартин Лютер Кингпа паллашать.

Каччă хěртен икě çул кěçěнрех пулнă. Çавăнпа Мартин ашшě-амăшě çак мăшăрланăва хирěçлет. Анчах та çамрăксем те чакмаççě. Мăшăра Коретта ашшě Овидий Скотт венчете кěртет. Туй та 1953 çулта хěр килěнчех кěрлет. Вěренсе пěтернě хыççăн çамрăксем Алабама штатěнчи Монтогомери хулине куçаççě.

Вун пилěк çул хушшинче çемьере тăватă ача – икě хěр те икě ывăл – çуралать. Вěсен пурнăçне лăпкă иртнě тесе калаймăн. Радикал расистсем вěсене сыхласах çӳреççě. Пěррехинче çурта сирпěтсе яма та тăраççě – бомба пăрахаççě. Ăнсăртран кăна пурте чěрě юлаççě. Коретта аллинче çав вăхăтра икě уйăхри пепки пулнă...

Мартин Лютер Кинг пурнăçě Мемфисра снайпер пульлине пула татăлать. Коретта Скотт Кинг тěрěслěхшěн кěрешме пăрахмасть. Афроамерикансен прависемшěн кăна мар, хěрарăмсен ирěкěшěн те кěрешет Мартин Лютер Кинг мăшăрě.

Коретта Скотт Кинг "Вăйпа çыхăнман социаллă улшăнусен центрне" йěркелет. Ăна упăшкин ятне парать. Мемуарсем çырать.

2000 çулсен пуçламăшěнче Коретта Скотт Кинг сывлăхě хавшать. 2005 çулхи çурла уйăхěнче унăн анлă инсульт тата миокард инфаркчě пулать. Больницăра уйăха яхăн сипленнě хыççăн хěрарăма текех общество ыйтăвěсемпе аппаланма чараççě. Ашшě-амăшěн кěрешӳ ялавě ачисен аллине куçать. Юлашки хут Коретта Скотт Кинг халăх умне 2006 çулхи кăрлачăн 14-мěшěнче хăйěн мăшăрне халалланă уявра тухать. Икě эрнерен хěрарăм ěмěрлěхех куçне хупать. Унпа сыв пуллашмашкăн вун тăватă пин ытла çын пырать. Хěрарăм Мартин Лютер Кинг центрěнче мавзолейра упăшки çумěнче ěмěрлěх канăç тупать.

**/"Знаменитости"/.**

ÇĂЛТĂР ÇУМĂРĚ

# Çын кěсйине... пăхар-ха

Çăлтăрсен пепкисен ачалăхě нумай чухне чаршав хыçěнче иртет. **Анджелина Джоли** хăйěн пултарулăхне шăпах ашшěн – Америка актерěн Джон Войтăн – пурнăçне сăнаса аталантарнă. Паян вăл хăй те – çăлтăр. Хěрарăм уйăхра вăтамран 1 666 667 доллар ěçлесе илет. **Энрике Иглесиас** юрăç та ашшěн çулěпех кайнă. Пылак сасăллăскер карьера тума мěн ачаранах хатěрленнě. "Испани чи лайăх сассин" Хулио Иглесиасăн ывăлěн шалăвě вăтамран 283 000 доллартан иртнě. Çапах та çăлтăрсен ачисен пурин те шăпа çулě такăр пулнă тесе калаймăн. **Стелла Маккартни** хăй ашшě – Пол Маккартни – пек нихăçан та юрлаймассине аван ăнланнă. Çавăнпах урăх çул суйласа илнě те... мода енěпе самаях ăнăçтарать. Халě çак дизайнер спорт паллă марки валли çи-пуç хатěрлет. Чиперкке **Иванка** – писатель, телеертӳçě, мультимиллиардер Дональд Трам хěрě – ашшě патěнчех вăй хурать. Анчах пике модель тата дизайнер кăна мар, унăн хăйěн Иванка ятлă ювелир линийě пур. Çирěмри хěр тупăшě – 2 миллиард доллар. Америка актерěн Уилл Смитăн хěрě **Уиллоу Смит** кинора ӳкерěнет, треksем çырать. Унсăр пуçне вăл "Замби проекчě" ыр кăмăллăх фондěнче тăрăшать. Анчах хěр туприн калăпăшě паллă мар. Совет хěрарăмěсен юратăвě, Инди актерě **Амитабх Баччан** ăнăçу çулěпе ашшěне – Хариванш Рай Баччан сăвăçа пула – утма пуçланă. Халě вăл актер тата политолог. Уйăхри тупăшě – 6 473 доллар. Сăмах май, унăн ывăлě Абхишек актер – хальхи вăхăтри чи хитре актрисăн Айшвария Райăн упăшки. Раççей киновěн паллă актерě **Никита Михалков** та çăлтăр çемйинче çуралнă. Паллă "дядя Степăн", совет писателěн Сергей Михалковăн ывăлěн уйăхри тупăшě – 141 600 доллар. Раççей паллă режиссерěн Сергей Бондарчукăн тата Ирина Скобцевăн ывăлě **Федор Бондарчук** уйăхра 83 333 доллар ěçлесе илет. **Кристина Орбакайте** амăшěн Алла Пугачевăн хӳттичнен тухаймасть-ха. Çапах Раççей эстрада Олимпне пěчěккěнех парăнтарса пырать. Уйăхри шалăвě 100 000 долларпа танлашать. Сăмах май, ывăлě Никита Пресняков та пултарулăх çулнех суйласа илнě. Паллă телеертӳçě **Иван Ургант** – Андрей Ургант актер ывăлě тата Нина Ургант актриса мăнукě – уйăхсерен 191 000 доллар ěçлесе илет. **Эдгард тата Аскольд Запашныйсем** – вырăс паллă дрессировщикěсен йăхěн тăсăмěсем. Çемье бизнесě вěсене çулталăкра 6,3 миллион доллара яхăн туптама май парать.

**/«Информация.Ру»/.**



Нарăсăн 14-мĕшĕ... Нарăсăн 23-мĕшĕ... Пушăн 8-мĕшĕ... Тен, виçĕ çак уява пĕрлештермелле? Çĕр-шыв хӳтĕлевçисене юратакан хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери кунĕ тесе ят памалла та...

* * *

– Мĕн тунсăхлă курăнатăн?

– Пĕлетĕн-и, ĕнер метрона кĕтĕм те хитре хĕре куртăм. Çамрăк, ури вăрăм, хăй çылра пек...

– Вара?

– Чăтаймарăм – куç хĕсрĕм.

– Вара?

– Вăл вара тăчĕ те... мана вырăн пачĕ...

* * *

– Атте, эсĕ аннене мĕнле кун тĕл пулнине ас тăватăн-и?

– Ăнăçсăр кун...

* * *

Ман патран ирхине кам арçынни тухса кайнине пурте пĕлеççĕ. Вăт хваттерес çаратрĕç – никам та нимĕн те пĕлмест.

* * *

Ылтăн пулă – старике:

– Халтан ятăн ĕнтĕ эсĕ мана! Санăн кӳршĕн ĕни те пĕрре кăна, эсĕ вара вăл кăнса вырттăр тесе ман пата виççĕмĕш хут килетĕн!

☺И-ХИ-ХИК☺

* * *

Ултă хыççăн апат çиес мар терĕм... Кайса яшка ĕçемха...

* * *

Икĕ ĕмĕт вĕçĕмсĕр канăç памаççĕ мана: начарланас тата çиес килет...

* * *

– Эпĕ ĕнер пĕр тăрăшмасăр 800 килокалори çунтарса ятăм.

– Так, так... Тĕплĕнрех каласа кăтарт-ха...

– Мĕн тĕплĕнрехххи?.. Микрохумлă кăмакаран кăларма манса кайнă...

* * *




Тараса çине тăнă май арçын хырăмне шалалла туртса кĕртме тăрăшать. Çакна арăмĕ асăрхать.

– Пулăшать пулĕ тетĕн-и?

– Пулăшмасăр! Цифрăсене курмастăп унсăрăн...

* * *

Ашшĕ хĕрне сывăрма выртарать. Çур сехетрен пӳлĕм алăкне амăшĕ уçса пăхать:

– Мĕнле, çывăрать-и?

– Çывăрать, анне.

* * *

Лавккара арçын ача çĕтсе кайнă. Макăраканскерне лăплантарма пăхаççĕ:

– Тупăнать аннӳ, ан кулян. Унăн кĕпи аркинчен тытмалла пулнă санăн...

– Тытасшăнччĕ те... Çитеймерĕм çав...

* * *

Ашшĕпе амăшĕ хăнана каяççĕ, килте юлакан ывăлне ăнлантараççĕ:

– Асун ĕç пӳлĕмне ан кĕр, кĕнеке шкапĕ патне ан пыр, çӳлти çӳлĕк çинчи хура хуплашкаллă кĕнекене ан тыт, пиллĕкмĕш страницăран пуçласа çĕр пиллĕкмĕш таран ним тусан та ан вула...

Таврăнаççĕ... Ывăлĕ вĕсем мĕн каланине илтмен те тейĕн – мĕнле ларнă компьютер умне, çаплипех хăпма пĕлмест...

* * *

Ют çĕр-шыв посолĕсем килсе çитнĕ ятпа Анăçра уяв йĕркеленĕ.

– Эсир тем кичем пек курăнатăр, – тет çĕр-шыв ертӳçи акăлчан посола.

– Калама та аван мар та... – хуравлать лешĕ, – ...анчах та манăн ылтăн сехет çухалчĕ. Сехечĕ те тарамаччĕ-ха, анчах та ăна королева хăй парнеленĕччĕ. Маншăн çавăнпа питех те хаклă вăл.

– Эсир кампа хутшăннине ас тăватăр-и? Тен, ку ĕçе кам тума пултарнине тĕшмĕртетĕр?

– Ас тумасăр... Ав çавă шурă костюм тăхăннă арçынпа.

– О-о-о-о! Ку манăн администраци ертӳçи!

– О! Каçарăр!

Çĕр-шыв ертӳçи пăрăнса утать, пĕр вăхăтран каялла таврăнать, аллинче – ылтăн сехет.

Посол:

– Сирĕн администраци ертӳçи мĕн терĕ вара?

– Мĕн тетĕр вăл? Сисмерĕ те...

* * *

Кичем... Унран хăтăлас тĕллевпе официаллă сете кĕтĕм, палламан арçыннăн сăн ӳкерчĕкĕ айне "эсĕ мана юратмастăн" тесе çырса хутăм. Паян манăн страницăна 200 арçын уçса пăхнă – юлташĕсем. Арăмĕ те... Палламан арçын, каçар мана. Енчен те эсĕ чĕрĕ пулсан...

* * *

Виççĕмĕш кун çумăр çăвать... Арăмăн депресси пуçланнă – пĕр вĕçĕм чӳречерен пăхать. Енчен те çумăр ыран та çума чарăнмасан арăма киле кĕртмех тивет ахăр...



## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

### ПРОДАЮ

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89875766562.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т.8-960-301-63-74.

**7.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 89051990122.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. **Доставка.** Выездная сварка /генератор/. **Грузоперевозки.** Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**16.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производ-ля: чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов; **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.

**20.Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Найдёте дешевле – уступим. Без вых. Т. 89625989686.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**22.ОКНА пластиковые, железные ДВЕРИ.** Реально низкие цены. Гарантия. Т. 89871267170.

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ, косилки, сажалки, копалки,** окучники, опрыскиватели. Доставка. Т. 89278533596.

**33.Гравмассу, песок, керамзит, щебень,** торф. Недорого. Доставка. Т. 89053465671.

**35.Блоки керамзитобетонные** вибропрессованные, пропаренные. Дёшево. **Т. 89373866629.**

**45.АКЦИЯ! БЛОКИ** КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ 20х20х40 – **33** руб., 9х20х40, 12х20х40; **кольца** колодезные всех размеров от производителя, по низким ценам – бурение, монтаж; песок, гравмассу, щебень, торф, навоз, чернозем, КИРПИЧ в ассортименте. Д-ка. Т. 89196543499. Звоните!

**47.Керамблоки** 20х20х40 от производителя. Т.: 48-92-77, 8-903-389-90-38.

**52.Пластиковые ОКНА,** железные **ДВЕРИ.** Замер, доставка – бесплатно. Без выходных. Т.: 89176529694, 89276679588.

**53.Отруби, зерно,** к/корм, сахар, мука. Доставка. Т. 89373916016.

**59.СЕМЕНА кормовой свеклы "ЛАДА"** высокой репродукции. Тел.: 8/8352/ 73-39-11, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**60.СЕМЕНА** высокоурожайных **томатов, огурцов, перцев** и др. Тел.: /8352/ 73-39-11, 75-80-34, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

### ПРОДАЮ

**61.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое качество. Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

**66.Заборы кованые.** Т. 89276689587.

**77.ТЕПЛИЦЫ: 3х6** – 12000 р., **3х8** – 15000 р. Доставка. Т. 48-16-54.

**117.ОКНА Чувашии.** Пластиковые **окна,** железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 89050281182.

**121.Песок, гравмассу,** бой кирпича, **щебень.** Т. 89196567752.

### УСЛУГИ

**51.Бурение колодцев,** скважин, **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 89373790080.

**96.Православный экстрасенс.** Т. 89876603929.

**99.Автоматические ворота, видеонаблюдение.** Т. 89278636398.

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 8-960-302-12-93.

### КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**70.Дом** с участком в любом состоянии. Т. 8-960-300-87-87.

**104.Бычков, коров, тёлок, овец,** свиноматок. Т. 8-937-014-49-97.

**587.Коров, бычков и лошадей.** Т. 89030659909.

### РАБОТА

**100.Требуются монолитчики.** Т. 89276678272.

**110.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 89250022238.



## ПАХЧАÇĂ КĔТЕСĔ

# Хуçине сад çулталăкĕпех кĕтет

**Хĕлле пире пур тавралăх та çывăрать пек туйăнать те... Туйăнать кăна çав. Шурă юр айĕнче те пурнăç пырать. Çут çанталăк вăранма пуçларĕ, халĕ çуркуннене хатĕрленме шăпах вăхăт.**

## Йывăççемпе тĕмсем



Кĕçех юр ирĕлме пуçлать, шыв йывăç кутĕнче пухăннипе унăн хуппи çĕрме те пултарать. Ытлашши шыва юхса каймашкăн çул уçса памалла.

Хĕвел ăшши пур чухне те лайăхах мар. Вăл нарăç уйăхĕнчех çутине те, хĕрӳлĕхне те ытларах сапалама пуçлать, йывăçăн хура вулли çакна пула шар курма пултарать. Çамрăк йывăççене уйрăмах хĕвелпе çунса каясран хӳтлĕх кирлĕ. Лару-тăру кăткăсланма та пултарать – кăнтăрла ăшă, каçхине вара сивĕ çитсе çапать. Çавăнпа та йывăç-тĕме тепре пăхса тухмалла, кĕркунне шуратса хăварни кайса пĕтнĕ тĕк татах сăрламалла. Кăнтăр енчен хĕвелтен кăштах хуплаксан аван.

Улма-çырла йывăççисене çуркунне енне шăпах шăши тапăнма пултарать. Вулă тавра юра пĕр-икĕ хутчен хыттăн таптаса çаврăнни пăсмĕ.

Тунана мулкач кăшласа та амантма пултарать. Унран хӳтĕленсе йывăçа кĕркуннех çыхса хăварнă тăк питĕ аван.

Сада кĕтмен хăнасем – кайăксем – иленнĕ-и? Питĕ аван. Вĕсемпе туслашма тăрăшмалла, хăвалаcа ямалла мар. Пачах тепĕр май – сырăш туса çакмалла: пахчана илем те кӳрет, усăллă та.

Нарăç уйăхĕнчех çуркунне лартма улмуççи, слива, груша пĕр çулхи сапанне хатĕрлеме пуçламалла. Вĕсене йывăçăн кăнтăр енчи пайĕнчен илсен аван. Çак вăхăтрах хĕрлĕ тата хура хурлăхан туратне те янтăламалла. Вĕсене юр айĕнче е сивĕтмĕшре упрамалла, каснă вырăна ăвăса чиксе кăлармалла.


«ХЫПАР» Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИПЕ МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор – тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ

Çырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – А.И.ИЗМАН

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев служби 2013 çулхи ака уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.



**РЕДАКЦИ АДРЕСĔ:**
428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, 6 хут, "Чăваш хĕрарăмĕ"
**ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ:**
55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.

**Факс:** /8352/ 28-83-70, 56-20-07
**Электрон почти:** hypar@chtts.ru



Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", «Самана таппи»** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 21 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
56-00-23 – издательство директорĕ.
Тираж 8894. Заказ 633.